45-23

3681
ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

# Чăваш Республикинчи Советсем 25 çул хушшинче

ЧĂВАШГОСИЗДАТ—1945

З. А. АНДРЕЕВА
Чăваш АССР Верховный Совет
Президиумĕн Председателĕ

# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ СОВЕТСЕМ 25 çул хушшинче

ЧĂВАШГОСИЗДАТ—1945

I

1920-мӗш ҫулхи июнӗн 24-мӗшӗнче Пӗтӗм Российӑри Центральный Исполнительный Комитет Председателӗ М. И. Калинин юлташ тата РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ В. И. Ленин юлташ ал пусса Чӑвашсен Автономиллӗ облаҫне тӑвасси ҫинчен декрет кӑларнӑ.

Унтанпа 25 ҫул иртрӗ.

Ҫак паха та чаплӑ юбилея орденлӑ Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисем мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар фашистла Германие пуҫӗпех ҫапса ҫӗмӗрнӗ савӑнҫлӑ кунсенче, „Отечественнӑй Аслӑ вӑрҫӑ эпир татӑклӑнах ҫӗнтернипе вӗҫленчӗ. Европӑри вӑрҫӑ тапхӑрӗ пӗтрӗ. Мирлӗ аталану тапхӑрӗ пуҫланчӗ" (И. Сталин) кунсенче кӗтсе илеҫҫӗ.

Ҫирӗм пилӗк ҫул хушшинче Чӑваш республики паллamалла мар улшӑнчӗ. Октябрьти Аслӑ Социализмла революци эксплоататорла классене пӗтерчӗ, ӗлӗкхи патша Российӗнчи халӑхсене—вӑл шутра чӑвашсене те—нациллӗ чӑн-чӑн пӗртанлӑх тата хуҫалӑхпа культура тӗлӗшӗнчен ӳссе аталанмалли пур майсем те туса пачӗ.

Революциччен Чӑваш ҫӗршывӗ патша Российӗн колонийӗ пулнӑ. Чӑваш халӑхӗ икӗ пусмӑр айӗнче—вырӑссен буржуазийӗпе чӑвашсен буржуазийӗн пусмӑрӗ айӗнче асапланса пурӑннӑ. Ӗлӗкхи Российӑн картти ҫинче чӑвашсене палӑртман та. Чӑваш халӑхӗ ҫӗр ҫитменнипе, лаша ҫуккипе, социаллӑ чирсемпе асапланса пурӑннӑ, вӑл ӗлӗкхи вӑхӑтра пӗтӗмпех пӗтсе ларасси патне ҫитнӗ халӑх пулнӑ.

Вӗҫӗмсӗр нумай налогсемпе хырҫӑсем хресченсене пӑвмаллипех пӑвнӑ. Хресченсенчен нумайӑшӗсен, уйрӑмӑнах чухӑнсен, яланах пуянсенчен укҫа, тырӑ кивҫен илмелле пулнӑ, ҫакна пула вӗсем нумай ҫулсем хушши тарҫӑсем пулса тӑнӑ, вӗсене вӑл пусмӑрлӑхран хӑтӑлма май та ҫук пек туйӑннӑ.

Ҫакна икӗ тӗслӗх уҫӑнах ҫирӗплетсе параҫҫӗ.

Чураш ялӗнчи (Етӗрне уесӗ, Сурӑм вулӑсӗ) чӑваш Баландай Танчитов Етӗрнери (воеводство) канцелярийӗнче ӗҫлекен канцеляриста Демешева ал пусса хут ҫыр-

са панӑ, унта вӑл Демешевран кивҫен 7 тенкӗ укҫа илни ҫинчен, уншӑн ӑна хӑйӗн Вурманча ятлӑ ывӑлне 10 ҫул хушши ӗҫлеме пани ҫинчен ҫырса ал пусса панӑ". (Хусан университечӗ ҫумӗнчи этнографипе истори тата археологи обществин пӗлтерӗвӗ, XXVIII том, 1-3-мӗш выпуск, 97 стр.).

„Шупашкар чӑвашӗ Петр Сметанин Клюев ростовщикран 5 тенкӗ кивҫен илнӗ, уншӑн вӑл унӑн пур выльӑхӗсене те 4 ҫул хушши ҫитерсе пӑхса пурӑнма пулнӑ". (Ҫавӑнтах, 71 стр.).

Чӑваш хресченӗсен каярахри ҫулсенчи, вырӑссен пирвайхи революцийӗ умӗнхи ҫулсенчи, пурӑнӑҫне уҫҫӑн кӑтартса паракан тепӗр документ илӗпӗр.

Воскресенски вулӑсри (хальхи Октябрьски район) ялсенче пурӑннӑ хресченсем ҫапла ҫырнӑ: „Ҫӗр ҫинче кам тӑрмашса, куҫҫуль тӑкса, юн юхтарса, хӑйӗн чунне парса ӗҫлет, вӑл выҫӑллӑ-тутӑллӑ пурӑнать; ҫӗр те выҫӑ, эпир те, сухаҫӑсем, выҫӑ ҫеҫ мар, выҫӑпа вилетпӗр, цынга чирӗпе шыҫӑнатпӑр, тӗттӗмлӗхре терт куратпӑр, администрацие тӗрлӗ начальниксем хуҫаланнинчен хӗн курса пурӑнатпӑр. Текех кун пек пурӑнма май ҫук". Пиншер чӑваш хресченӗсем, Некрасов ҫырнӑ тӗрлӗ ялсенчи „Заплатово, Дырявино, Разутово, Знобищиво, Горелово, Неелово, Неурожайка" ялӗсенчи хресченсем пек, хӑйсен тӑван ялӗсенчен инҫетри вырӑнсене ӗҫлеме тухса кайнӑ, ҫапла вӗсем хӑйсен ҫемьисене аран-аран тӑрантаркаласа усранӑ.

Чӑваш хресченӗсенчен нумайӗшӗсем бурлак пулса ӗҫленӗ.

Ӗлӗкхи вӑхӑтра чӑвашсем епле тертлӗ пурӑнни ҫинчен чӑваш поэчӗ Тайӑр Тимкки ҫапла ҫырнӑ:

Йӗри-тавра куҫҫулли,
Йӗри-тавра йынӑшни,
Вӗҫӗмсӗр тӗнче тулли,
Вӑйсӑр халӑх юн тӑкни...

Феодаллӑ-крепостла пусмӑрлӑхпа патша самодержавин колонизаторла политикине пула, чӑваш халӑхӗ Октябрьти революцичченех Российӑри чи кая юлнӑ халӑхсенчен пӗри пулнӑ.

Чӑваш халӑхӗн промышленность пулманпа пӗрех, ялхуҫалӑхӗ те питӗ кая юлнӑ пулнӑ. Хирсене авалхи суха пуҫӗсемпе сухаланӑ.

Культура ҫинчен сӑмах та пулма пултарайман, вӑл кӑшт ҫеҫ ҫуралма пуҫӑннӑ. Патша правительстви нациллӗ культурӑпа искусствӑна пур майпа та путарса пынӑ.

Хальхи Чӑваш республики йышӑнакан территоринче 1913-мӗш ҫулта пурӑннӑ халӑхран 82 проценчӗ хутла пӗл-

мен. Ёҫҫыннисен ачисем вăтам шкулсемпе аслă шкулсенче вĕренесси ҫинчен ĕмĕтленме те пултарайман. Халăха ҫут-та кăларас ĕҫ валли укҫа-тенкĕ те питĕ сахал панă: пĕр ҫын пуҫне ҫулталăка 66 пус кăна тăкакланă. Шкулсем тăвас вырăнне патша правительстви чиркӳсемпе монастырьсем лартса тултарнă. Ҫитменнине чăваш халăхне хăрушă чир—трахома ҫав тери йывăр асапсем кӳрсе тăнă. Чăвашсем хушшинче трахомăпа чирленисем 80—90 процента яхăнах пулнă, ҫак хушăрах трахомăран сыватакан пĕр окулист-врач та пулман. Чăваш ялĕсем тăрăх ҫĕршер ыйткалакансемпе суккăр ҫынсем ҫӳренĕ. Ялсенче старостасем пуҫпулса пурăннă, вĕсем халăха улталаса, хăратса кăна тăнă.

Старостăсене суйласси яланах ĕҫкĕпе пулса иртнĕ. Старостăна суйланакан ҫын хăйне пысăк ĕҫ „шанса панишĕн" суйлакансене ĕҫтерсе ӳсĕртнĕ. Паллах ӗнтĕ, старостăна эрех нумай илме пултаракан ҫын ҫеҫ кĕнĕ.

Вулăсри старшинана та вулăсри пухура ҫав майпах суйланă.

Шупашкар уесĕнчи 1-мĕш участокри земски начальник хучĕсем хушшинче вулăсри старшинана мĕнле суйлани ҫинчен лайăх кăтартса паракан тĕлĕнтермелле документсем сыхланса юлнă. Осанов текен пĕр этем, епле пулсан та вулăсри старшина пулас тесе, 1907-мĕш ҫулхи декабрĕн 15-мĕшĕнче пулнă суйлав кунĕ пĕтĕм суйлавҫăсене эрех ĕҫтерсе ӳсĕртнĕ те, старшина пулса тăнă.

Ҫак „суйлав" пирки панă жалобăра ҫапла ҫырнă: „Тогашево вулăсĕнчи старшинана суйланă чухне пухури ҫынсем пурте ӳсĕр пулчĕҫ. Эрехне хисепсĕр нумай ĕҫрĕҫ. Мана 5 стакан эрех, ҫырткалама 2 кĕрепенке шушкă тиврĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, Андрей Антонович Осанов 50 тенкĕ тăкакларĕ, ҫакна вăл вулăс старшини пулас тесе ҫеҫ турĕ. Ҫак суйлава тĕрĕс мар тесе, хресченсенчен чылайĕшĕсем ыйтнă тăрăх, сирĕнтен, ваше высокородие, вулăс старшинине Осанова суйлани ҫинчен ҫырнă приговора пăхса тухмăр-ши, ăна пăрахăҫламăр-ши, тесе ыйтма хăяс терĕм".

Земски начальник хресченсен жалобине августăн 15-мĕшĕнче кăна, урăхла каласан, 8 уйăх иртнĕ хыҫҫăн тин пăхса тухнă. Вăл жалоба ҫине: „Вулăсри пуху йышăннă постановление ҫаплипех хăварас", тесе ҫырса хунă.

Чăвашсем ҫĕршер ҫул хушши колониллĕ пусмăр айĕнче пурăннă. Ҫав пусмăр йывăрланса ӳссе пынăҫемĕн чăваш халăхĕ хăйне пусмăрлакансене курайми пулса пынă.

Чăваш ĕççыннисем çĕршер çул хушши ирĕклĕ те савăнăçлă пурăнăçпа пурăнма, ирĕклĕн ĕçлеме ĕмĕтленнĕ. Аслă вырăс халăхĕ пуçпулса ертсе пынипе, вĕсем Атăл тăрăхĕнче пурăнакан ытти халăхсемпе пĕрре кăна мар алла хĕçпăшал тытса, лайăх пурăнăç кĕрешсе илес тесе, хăйсене пусмарлакансене хирĕç восстание тухнă. Ытти халăхсемпе пĕрле чăвашсем Степан Разин киммисем çинче те ишсе çӳренĕ (1670—71). Разин хыççăн чăваш территорийĕ урла Емельян Пугачев иртсе кайнă (1774). Пугачев çарне чăвашсем нумайăн, ушкăнăн-ушкăнăн хутшăннă. Анчах патша правительстви вăл пăлхавсене путарса лартнă, пăлхава хутшăннă çынсене çав тери хĕн кăтартса вĕлернĕ, ун чухне пĕтĕм чăваш çĕрĕ çине çынсене çакса вĕлернĕ виселицăсем лартса тухнă.

Чăвашсем хăйсем тĕллĕн чи пысăк пăлхав 1842-мĕш çулта пуçарса янă, çак пăлхава („Акрамоври восстани") Шупашкар, Етĕрне, Çĕрпӳ, Чикме уесĕсем хутшăннă.

1861-мĕш çулхи реформа та революциллĕ пăлхавсене çĕнĕрен хускатса янă, мĕншĕн тесен вăл реформа халăха „ирĕке кăларни" вырăнне, ăна çĕнĕ пусмăр айне кӳртсе хунă.

1905-мĕш çулти революцире чăваш хресченĕсем питех те пысăк политикăллă воспитани илнĕ. Çак революци вăхăтĕнче чăвашсем хăшпĕр çĕрте çине тăрсах вăйлăн çапăçнă, анчах патша правительстви вĕсене те путарса лартнă, юн айне тунă.

1905-мĕш çулхи революци чăваш халăхне помещиксемпе капиталистсен пусмăрлăхĕнчен вырăссен рабочи класĕ пулăшнипе кăна, большевиксен партийĕ ертсе пынипе кăна хăтăлма май пуррине кăтартса панă.

1917-мĕш çулта, февральти буржуаллă-демократиллĕ революци çĕнтернĕ хыççăн, буржуаллă партисем пурте: эсерсем те, меньшевиксем те, кадетсем те Вăхăтлăх правительствăна мĕнпур вăйпа пулăшса тăчĕç. Хăйсен контрреволюциллĕ ĕçĕсене нациллĕ пĕркенчĕкпе витсе, вĕсем чăвашсен ирĕклĕхшĕн кĕрешекен нациллĕ юхăмĕ пуçне тăма хăтланчĕç. Вырăнти буржуази, вăл шутрах кулаксем те, влаçа буржуази тытса илнипе савăнса, Вăхăтлăх правительствăна пур енчен те хапăл туса йышăнчĕ, вăл вырăнти контрреволюциллĕ влаçа çирĕплетме тытăнчĕ.

Вăхăтлăх правительствăн уессенчи комиссарĕсене контрреволюциллĕ буржуазипе кивĕ чиновниксенчен суйласа лартнă.

Халăха улталас тата вырăнти влаçăн контрреволюциллĕ ĕçĕсене пытарас шутпа, меньшевиксемпе эсерсем ĕççын-

нисемшĕн тăнă пек пулса, ултавлă сăмахсемпе йăпатса илĕртме пуçăнчĕç. Анчах малашнехи ĕçсем ĕççыннисене Вăхăтлăх правительство вăл—империализмла буржуазийĕн тарçи, вăл рабочисемпе хресченсем ыйтнине пĕрне те пурăнăçа кĕртес çуккине кăтартса пачĕç. Хресченсем вара хăйсене шантарса калакан пуш сăмахсене ĕненми пулчĕç, вĕсем пур çĕрте те Вăхăтлăх правительствăн политикине хирĕç тухма пуçларĕç. Нумай вырăнсенче хресченсем государство влаçĕн çӳлти органĕсене, эпир вĕсене суйласа лартман тесе, йышăнми пулчĕç.

Чупай вулăсĕнчи пухăва пуçтарăннă хресченсем мартăн 18-мĕшĕнче Çĕньял ялĕнче вулăс старшинине „салтак пайкисене тата салтак çемьисене памалли пособисене вăрланăшăн" арестленĕ.

1917-мĕш çулхи март уйăхĕнче Енĕшри, Ишекри тата Шупашкар уесĕнчи ытти пасарсенче те хресченсем пĕтĕм лавкасене çĕмĕрсе тăкнă.

Хресченсем Вăхăтлăх правительствăна помещиксемпе капиталистсен интересĕсемшĕн вăрçă вăрçмашкăн тырă та паман. Вăхăтлăх правительствăн Хусан кĕпĕрнинчи комиссарĕ чăвашсем пурăнакан вулăссенче „йĕрке тумашкăн" яланах салтак отрячĕсем ярса тăнă. Хресченсене арестленисĕр пуçне, персе вĕлернисем те час-часах пулкаланă.

Çак вăхăтра чăвашсен хулисенче тунă Рабочисемпе салтаксен депутачĕсен Совечĕсем, хресченсем хушшинче Вăхăтлăх правительствăн контрреволюцилле ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларса питлес тесе, анлă ĕçсем туса ирттернĕ. Çак ĕçе туса ирттерме большевикла хаçатсемпе листовкăсем те, фронтран таврăнакан салтаксем каласа панисем те нумай пулăшнă.

Вăл вăхăтра хуласенче пулнă Совегсенчен большевиксен шухăшĕсене сарас тĕлĕшпе пуринчен ытла тăрăшса ĕçлекенни Шупашкарти Рабочисемпе салтаксен депутачĕсен Совечĕ пулнă.

Шупашкарти Рабочисемпе салтаксен депутачĕсен Совечĕ ĕççыннисем хушшинче тăрăшса ĕçленĕ. Унăн влиянийĕ уйрăмăнах уессенчипе вулăссенчи хресченсен съезĕсенче вăйлă пулнă.

Шупашкарти Рабочисемпе салтаксен депутачĕсен Совечĕ „Чебоксарская правда" ятлă хаçат кăларса тăнă. Çак хаçат страницисем çинче революцилле юхăма хирĕç кĕрешекен „хăрушăсăрлăх комитечĕн" контрреволюцилле ĕçĕсене питленĕ. Анчах каярахпа большевиксене — Совет членĕсене—„хăрушăсăрлăх комитечĕ" арестленĕ.

Вăхăт кăшт иртсенех Петроградпа ытти пысăк хуласенче тата промышленность центрĕсенче власть Рабочисемпе салтаксен депутачĕсен Совечĕсен аллине куçнă. 1917-мĕш çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче Петроградри Совет заседанийĕн трибуни çинчен тĕнчери пĕрремĕш социализмлă государствăна тăвакан генийлĕ организатор Владимир Ильич Ленин сăмахĕсем пĕтĕм тĕнчене илтĕнмелле янăраса кайрĕç: „Рабочисемпе Хресченсен революцийĕ, ăна тума кирли çинчен большевиксем яланах калатчĕç, пулса тăчĕ... Паянтан пуçласа Россия историйĕнче çĕнĕ талхăр пуçланса каять, вырăссен хальхи виççĕмĕш революцийĕ вара социализм çĕнтерессине вĕçне çитичченех пурăнăçлама май памалла". (Ленин, XXII-мĕш том, 4 стр.).

Пролетарилле революци çĕнтернин хыпарĕ пĕтĕм Российăна çиçĕм пек хăвăрт сарăлчĕ.

18(5)-мĕш ноябрьте халăха чĕнсе ятарласа çырнă çырăвĕнче В. И. Ленин çапла çырнă: „Юлташсем ĕççыннисем! Халĕ государствăна хăвăр ертсе пыни çинчен асра тытса тăрăр. Хăвăр пĕрлешсе государствăн пĕтĕм ĕçĕсене хăвăр алла илмесен, сире никам та пулăшас çук... Сирĕн Советсем—паянтан пуçласа государство влаçĕн органĕсем, ĕçе татса пама пултаракан полномочиллĕ органсем пулса тăраççĕ... Юлташсем рабочисем, салтаксем, хресченсем тата мĕнпур ĕççыннисем! Пĕтĕм влаçа хăвăр Советсен аллине илĕр". (Ленин, XXII-мĕш том, 55 стр.).

„1917-мĕш çулти октябрьпе 1918-мĕш çулти январь—февраль хушшинче советла революци пĕтĕм çĕршыва сарăлма ĕлкĕрнĕ. Совет влаçĕ питех те пысăк çĕршыв территорийĕ тăрăх çав тери пысăк хăвăртлăхсемпе сарăлса пынă, ăна Ленин Совет влаçĕн „триумфальнăй маршĕ" тесе каланă". (ВКП(б) Историйĕ, чăвашла издани, 258 стр.).

1918-мĕш çулхи çуркунне тĕлне хальхи Чăваш республики йышăнса тăнă территорийĕн вырăнти Советсем, государство влаçĕн органĕсем пулса, чăвашсем хушшинче пур çĕрте те ĕçленĕ.

Чăн та, вăл вăхăтра Советсенче кулакла элементсем те пулнă, вĕсем вара пур майсемпе те Советсен аппаратне пăсма тăрăшнă. Совет влаçĕ çинчен элек сарнă. Анчах чăваш коммунисчĕсем çав кулакла элементсен Советсене хирĕç туса пыракан пур контрреволюцилле ĕçĕсене тăра шыв çине кăларса пынă; вĕсем хресченсене Совет влаçĕн принципĕсем çинчен ăнлантарса парас тĕлĕшпе нумай ĕçсем туса иртгернĕ.

Чăвашсем-чухăнсем Советсем тавра тачăрах пĕтĕçсе пынă, вĕсем Вăхăтлăх правительство майлă çынсене палăртса, тăрă шыв çине кăларса пынă.

Совет правительстви 1918-мĕш çулхи июнĕн 11-мĕшĕнче кăларнă декречĕ тăрăх пур çĕрте те чухăнсен комитечĕсене тунă. Чухăнсен комитечĕсем (комбедсем) кулаксене хирĕç татăклăнах кĕрешнĕ, конфискациленĕ çĕрсемпе хуçалăх инвентарĕсене вĕсем валеçнĕ, кулаксен ытлашши тыррисене, апат-çимĕçне палăртса туртса илнĕ, промышленноçри рабочисемпе Хĕрлĕ Çара продовольстви тупса парас тĕлĕшпе нумай пулăшнă. „Пролетарисем яла поход туни тата чухăнсен комитечĕсене организацилени ялта Совет влаçне тĕреклетнĕ, вăтам хресченсене Совет влаçĕ енне кĕрешсе илессинче политика тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăнă". (ВКП(б) Историйĕ, чăвашла издани, 271 стр.).

Чухăнсен комитечĕсем Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсене тăвас тĕлĕшĕпе те пысăк вырăн йышăнса тăнă. Совет правительстви „Социализмла отечество хăрушлăхра" тесе пĕлтерсен, Совет Российĕнчи ирĕке тухнă ытти халăхсемпе пĕрле, чăвашсем пиншерĕн хăйсен çĕнĕ отечествине хăйсен кăкăрĕсемпе сыхлама тăчĕç.

„1918-мĕш çулăн вĕçĕ тĕлне чухăнсен комитечĕсем, хăйсен задачисене пурнăçа кĕртсе çитернĕ хыççăн, ĕçлеме чарăннă, вĕсем ялсенчи Советсемпе пĕрлешсе кайнă". (ВКП(б) Историйĕ, чăвашла издани, 271 стр.).

Чухăнсен комитечĕсене туни, чехословакипе учредиловецсен шурă бандисене çĕмĕрсе тăкни кулаксене татăклăнах пырса çапрĕ, вăл чăваш халăхĕн пурнăçĕнче пысăк улшăну турĕ.

Советсем юрăхсăр элементсенчен тасалса пыма пуçланă, уессенче тăваттăмĕш хут пухăннă хресченсен съезчĕсем вара пур çĕрте те большевиксем ертсе пынипе пулса иртнĕ.

1919-мĕш çулта Совет правительствипе парти чĕнсе каланине чăваш ĕççыннисем доброволецсен çĕнĕ ушкăнĕсене янипе ответлерĕç. Чăваш çĕрĕнчи Советсем вăл вăхăтра питех те пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. 1919-мĕш çулхи майăн 1-мĕшĕнче Шупашкар уесĕ фронта доброволецсем нумай янă. Çак тĕлĕшпе ытти уессем те кая юлса пыман.

Советсен вырăнти органĕсене çирĕплетес тата доброволецсен çĕнĕ отрячĕсене организацилес тĕлĕшпе чăвашсен территорине М. И. Калининпа В. М. Молотов юлташсем килсе кайни пысăк вырăн йышăнса тăрать.

М. И. Калинин Улатăр хулине килнĕ. Кунта вăл халăх

нумай пухăнна митингра витĕмлĕ сăмах тухса каланă, вăл революци тăшманĕсемпе кĕрешме чĕннĕ. Çав вăхăтрах В. М. Молотовпа Н. К. Крупская Колчака хирĕç кĕрешес ĕçе организацилес тата тыла çирĕплетес тĕлĕшпе Шупашкара агитпароходпа килнĕ. Ирĕке кăларнă чăвашсем хушшинче мобилизаци ĕçне Советсем ертсе пынă. Вĕсем тăрăшса ĕçленине пула, пиншер чăваш боецĕсене Колчакпа, Деникинпа, Врангельпе, шурă поляксемпе çапăçма фронта янă.

Чăваш халăхĕ вăл вăхăтра алла хĕçпăшал тытса камшăн çапăçнине аванах пĕлнĕ.

Октябрьти Аслă Социализмла революци чăваш ĕççыннисене помещиксемпе капиталистсен влаçĕнчен ĕмĕрлĕхех ирĕке кăларчĕ, вăл нациллĕ пусмăрлăха пĕтерчĕ, помещиксемпе чиркӳсен тата монастырьсен 77 пин десятин çĕрне ĕççыннисене пачĕ. Чăваш халăхĕ ирĕклĕ те савăнăçлă пурăнăçăн сарлака çулĕ çине тухрĕ.

Граждан вăрçи фрончĕсенче татăклă çĕнтерӳсем тунă хыççăн, чăваш ĕççыннисем ыйтнине хапăл туса, Сталин юлташ ертсе пынипе Чăвашсен Автономиллĕ Облаçне тăвас ыйтăва хатĕрлесе, 1920-мĕш çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче Чăвашсен Автономиллĕ Облаçне тăвасси çинчен Совет правительстви декрет кăларнă, вăл декретра çапла каланă:

## Пĕтĕм Российăри Центральный Исполнительный Комитетпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕн декречĕ

Пĕтĕм Российăри Центральный Исполнительный Комитетпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Российă Советлă Федеративлă Социализмлă Республикăн пайĕ шутĕнче Чăваш Автономиллĕ Облаçне тăвас, унăн администрациллĕ центрĕ Шупашкар хули пулмалла, Облаçе çаксене кĕртмелле:

Хусан кĕпĕрнинчен: Çĕрпӳ, Етĕрне, Шупашкар уесĕсене пĕтĕмĕшпех; Чикме уесĕнчен: Мăнал, Сĕнтĕр, Кĕçнерни, Шурча, Пушкăрт вулăсĕсене; Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Кăрмăш уесĕнчен: Атай, Кăрмăш, Улхаш вулăсĕсене; Пăва уесĕнчен: Хăмпуç-Патăр, Мăрат, Турхан, Шăмăршă, Шамкка вулăсĕсене кĕртес.

2. Чăваш Облаçĕнчи Советсен 1-мĕш съездне пухиччен Чăваш Автономиллĕ Облаçĕнчи пĕтĕм власть çак положенире кăтартнă уессемпе вулăссенче Революциллĕ Комитет аллинче пулмалла, унăн малашнехи задачи—Чăваш Облаçĕнчи Советсен 1-мĕш Съездне пухасси, унччен Облаçри ĕç-

сене ертсе пырасси пулать, унăн çак ĕçре Шупашкарти исполнительный Комитет аппарачĕпе усă курмалла.

3. Чăваш Облаçĕнчи Советсен Съезчĕ Чăваш Автономиллĕ Облаçĕн Исполнительный Комитетне суйлать, çав комитет кĕпĕрнери Исполнительный Комитетсемпе пĕртан праваллă пулать.

4. Чăваш Облаçри чиккисене татăклăн та тĕплĕнрех кăтартса тунă чухне сиксе тухма пултаракан ыйтусене татса пама Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕпе Вак халăхсен ĕçĕн комиссариатне пĕрле комисси тума хушас.

**Пĕтĕм Российăри Центральный Исполнительный Комитет Председателĕ М. И. КАЛИНИН.**

**Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ В. УЛЬЯНОВ (ЛЕНИН).**

Мускав, Кремль, 1920-мĕш çул, июнĕн 24-мĕшĕ.

Çак декрета кăларса, Совет правительстви чăваш халăхне государство правине пачĕ, ăна Аслă Совет Союзĕнчи ытти нацисемпе пĕртан праваллă туса хучĕ.

Чăвашсен Автономиллĕ Облаçне тунă хыпара чăваш ĕççыннисем пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕç.

Çак декрет тухнă хыççăн пур çĕрте те çынсем нумай пухăннă митингсемпе пухусем пулса иртнĕ, вăл митингсемпе пухусенче чăваш ĕççыннисем хăйсен рабочисемпе хресченсен влаçне яланлăхах сыхлама пулса, тупа туса çирĕп сăмахсем каланă.

Чăваш республикин халăх поэчĕ С. Эльгер „Паян" ятлă сăвăра ун чухне çапла çырнă:

Вут-хĕм тăкан Хĕрлĕ ялав айĕнче
Тăрса ураланнă чăваш ĕççынни,
Авал, пĕр хисепсĕр кунçул тăршшĕнче,
Пулайнă-ши санăн чунтан савăнни?

Паян эс историн мăн çулĕ çинче.
Умна та, хыçна та пăхса тĕлĕнен,
Тăван ялусем, хулусем хушшинче
Хăвах чăн хуçа пулнипе хĕпĕртен.

Автономи правине илни чăваш халăхĕ хушшинче политикăллă çĕнĕ хаваслăх ӳстерсе янă. Тин çеç организациленнĕ çамрăк Автономи Облаçĕ вăл вăхăтра выранти Советсем

çине, ялти чухăнсем çине, рабочисем çине таянса ĕçленĕ, çав вăхăтрах вăл влаçăн выранти органĕсене ют элементсенчен тасатса пынă. Чăваш облаçĕн Совечĕсем çапла çирĕпленнĕçемĕн çирĕпленсе пынă, вĕсем хăйсен ĕçĕпе ĕççыннисен сарлака массисене ытларан та ытларах хăйсем тавра явăçтарса пынă, вĕсене хăйсен ĕçĕсене сарлакан хутшăнтарнă.

1920-мĕш çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче Шупашкарта Чăваш облаçĕн Совечĕсен пĕрремĕш съезчĕ пухăннă. Çак съездра Автономиллĕ облаçĕн тĕп правительство органĕсене суйласа хăварнă.

Облаçри Советсен пĕрремĕш учредительнăй съезчĕ чăваш ĕççыннисене чĕнсе каласа, уйрăм деклараци пичетлесе кăларнă, вăл декларацире çапла çырнă: „Рабочисемпе Хресченсен Октябрь уйăхĕнчи Аслă революци, влаçа помещиксемпе капиталистсенчен хăй аллине туртса илсе, пĕтĕм ĕççыннисен массисене эксплоатацин пур тĕрлĕ пусмăрлăхĕнчен те хăтарчĕ... Астăвăр, пире Совет влаçĕ çеç ирĕк парать, рабочисемпе хресченсен влаçĕ панине пире тĕнчере урăх нимĕнле власть та пама пултарас çук, парас та çук... Çавăнпа пурте Совет влаçне хӳтĕлеме ура çине тăрăр! Тылпа фронта çирĕплетес майпа хамăр вăйсене вуншар хут ӳстерсе ĕçлĕр!“

Чăвашсен Автономиллĕ Облаçĕнчи рабочисемпе хресченсен тата красноармеецсен Совечĕсен съезчĕ 1921-мĕш çулхи июлĕн 2-мĕшĕнче, хамăр çĕршывра çĕнĕ экономикăллă политикăна пурăнăçа кĕртнĕ вăхатра пулса иртнĕ. Виççĕмĕш съезд 1922-мĕш çулхи ноябрь уйăхĕнче, граждан вăрçи пĕтнĕ хыççăн, „çĕршыва ура çине тăратас тапхăрта“, партипе Совет влаçĕ хуçалăха ура çине хăвăртрах тăратас, ĕççыннисен массисен культура ӳсĕмне хăпартас задачăналартнă вăхăтра пулса иртнĕ. Облаçри тăваттăмĕш съезд та çак лозунгпах пулса иртнĕ (1923-мĕш çул). Çак вăхăтра Чăваш облаçĕнчи пĕтĕм халăх хуçалăхĕ çирĕпленсе пыни уйрăмăнах палăрма пуçланă. Ун чухне чăвашсем хушшинчи хутпĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе, ĕççыннисен сарлака массисене, уйрăмăнах хĕрарăмсене, Советсен ĕçне анлăрах хутшăнтарас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртнĕ.

Çĕршыва ура çине тăратас тапхăрта чăваш халăхĕн пурăнăçĕнче тата тепĕр политикăлла пысăк событи пулса иртнĕ: 1925-мĕш çулта Чăваш Автономиллĕ Облаçĕнчен Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики тунă.

1926-мĕш çулхи январь уйăхĕнче Чăваш республикинчи Советсен пĕрремĕш съезчĕ (6) пухăннă.

Хуҫалӑхпа экономика ыйтӑвӗсене татса панипе пӗрлех, ҫак съездра совет строительстви ыйтӑвӗсем тӗлӗшӗпе те пысӑк ӗҫсем тунӑ. Съезд Советсен ӗҫӗсене кулленех лайӑхлатса пырас тӗлӗшпе постановлени йышӑннӑ. Унта ҫапла каланӑ: „ял совечӗсемпе волисполкомсем ҫумӗнче яланлӑхах ӗҫлеме организацилекен секцисемпе комиссисен ӗҫӗсене ертсе пырас тата шута илес ӗҫе тӗпренех лайӑхлатмалла. Советсен ӗҫри ҫитӗнӗвӗсене пур енчен те вӗренсе пырса, вӗсемпе малашнехи практикӑлла ӗҫсенче усӑ курмалла".

Чӑваш Автономиллӗ Советлӑ Социализмлӑ Республикӑри Советсен 2-мӗш (7) съезчӗ 1927-мӗш ҫулхи март уйӑхӗнче пулса иртнӗ.

Чӑваш республикинчи Советсен 2-мӗш съезчӗ халӑх хуҫалӑхне малашне те пӗр чарӑнмасӑр хӑпартса пыма кирлӗ ыйтӑва, нациллӗ культурӑна аталантарса пырас, ӗҫҫынни массисен культурлӑхне хӑпартас, Советсен ӗҫӗсене хӗрарӑмсене татах та ытларах хутшӑнтарас ыйтусене сӳтсе-явнӑ.

Чӑваш Сблаҫне Республика тунӑ хыҫҫӑн вунӑ ҫул иртсен, социализм строительствинче ҫитӗнӳсем тунӑшӑн Совет Союзӗн Правительстви Чӑваш Республикине аслӑ наградӑпа—Ленин орденӗпе наградӑларӗ.

Ҫак вӑхӑт тӗлне Чӑваш республики кая юлнӑ ялхуҫалӑх ҫӗршывӗнчен социализмла ялхуҫалӑхлӗ пулса тӑчӗ. Ҫав вӑхӑтрах шултра промышленность аталанма тытӑнчӗ.

1939-мӗш ҫултах пирӗн республикӑра 90 ытла шултра предприятисем пулнӑ, вӗсенчен 12 предприяти Пӗтӗм Союзри предприятисен хисепӗнче паллӑ вырӑн йышӑнса тӑнӑ. Канашпа Шупашкар хушшинчи чугун ҫула туса ӗҫе яни те орденлӑ Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисен пысӑк ҫитӗнӗвӗ пулса тӑрать. Чӑваш республикинче питех те чаплӑ ҫул-йӗрсем тунӑ, вӗсен шутӗнче асфальт сарнӑ ҫулйӗрсем те пур.

Аслӑ улшӑнусен ҫулӗсенче Чӑваш республикинчи хресченсем ҫӗнӗ ҫул ҫине, колхозлӑ пурӑнӑҫ ҫулӗ ҫине тӑрса, ҫӗре пӗрлешсе ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Колхоз стройӗ республикӑри ҫӗршер пин колхозниксене пуян та культурӑллӑ туса хучӗ. Ҫак ӗҫре Советсем питех те пысӑк вырӑн йышӑнчӗҫ. Пурӑнӑҫ ҫӗнелсе улшӑннӑ ҫак историллӗ паллӑ тапхӑрта 1929-мӗш ҫулхи мартӑн 20—29-мӗш кунӗсенче Чӑваш республикинчи Советсен 3-мӗш (8) съезчӗ пулса иртнӗ.

Малтанхи съездсемпе танлаштарсан, ҫак 3-мӗш (8) съезд массӑсен активлӑхӗ, уйрӑмӑнах хӗрарӑмсен активлӑхӗ ӳснипе палӑрса тӑрать. Ҫак съезд халиччен политикӑпа наци тата экономика енчен ҫӗршер ҫулсем хушши пусмӑр тӳссе

пурăнна чăваш ĕççыннисем социализмла строительство ĕçне, государствăна ертсе пырас ĕçе активлăн хутшăнса пынине уççăн кăтартса пачĕ.

Чăваш ĕççыннисем Советсен суйлавĕсене çулран çулах ытларан та ытларах хутшăнса пынă. Сăмахран, 1923-мĕш çулта суйлавсене суйлавçăсен хисепĕнчен 35,8% хутшăнна пулсан, 1925—1926-мĕш çулсенче суйлавçăсенчен 50,1%, 1930-мĕш çулта—63%, 1934-мĕш çулта—92,6%, 1939-мĕш çулта—98% хутшăнна.

Чăваш республикинчи Советсемпе вĕсен çумĕнчи секцисем хăйсен ĕçĕсене çулран-çулах анлăран та анлăрах сарса пынă. 1930-мĕш çулхи апрель уйăхĕнче Чăваш республикинчи Советсем çумĕнче пурĕ 3000 секци пулнă, вĕсем 35 пин члена пĕрлештерсе тăнă. 1935-мĕш çулта республикăра пурĕ 3255 секци ĕçленĕ, вĕсен че 44.433 член, вăл шутран 7.035 çын хĕрарăм ĕçленĕ. Советсен çумĕнчи секцисем яла коллективизацилес, культурăпа çутĕçне сарас тата трахомăпа кĕрешес тĕлĕшпе калама çук пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. 1930-мĕш çулта республикăри хуласенче пурĕ 45 секци ĕçленĕ, вĕсенче 2000 çын пулна. 1929—1930-мĕш çулта кăна хула совечĕсем çумĕнчи секцисем 168 учреждение, ял совечĕсем çумĕнчи секцисем вара 500 учреждениroute предприятие тĕрĕсленĕ. Ялсенчи хуçалăхпа культурăллă пурăнăçа организацилесе ярас тĕлĕшпе партипе правительство кăларнă решенисене пурăнăçласа пырас ĕçре Советсем çумĕнчи секцисем чăн-чăнах массăллă организацисем тата ял совечĕсене ĕçре пулăшса пыраканнисем пулса тăнă.

Çаксемпе пĕрлех батраксемпе чухăн çынсене организаципе политика тата хуçалăхпа материаллă пулăшу парас енĕпе те пысăк çитĕнӳсемех тунă. Чухăн çынсен материаллă пурăнăçне лайăхлатса пыни, чухăн çынсене колхозсене пĕрлештерни вĕсен активлăхне самаях хăпартнă.

Республикăра Совет аппарачĕн кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. 1930—31-мĕш çулсенче совет строительствин курсĕсем урлă райĕçтăвкомсемпе ял совечĕсенче ĕçлеме пурĕ 200 çын, районсенчи курссем урлă советсен кĕçĕн аппарачĕсенче ĕçлеме 2000 çынна яхăн вĕрентсе кăларнă.

1931-мĕш çулхи февраль уйăхĕнче пулса иртнĕ Чăваш республикинчи Советсен 4-мĕш (9) съезчĕ Чăваш республикин ялхуçалăхне социализмла çĕнетсе урăхлатас тата промышленноçа хăпартас тĕлĕшпе юлашки çулсенче пысăк çитĕнӳсем тунипе палăртса хăварнă.

Чăваш республикинчи Советсен 10-мĕш съезчĕ 1934-мĕш

çулта пуханна, çак съезд иртнĕ виçĕ çул хушшинче тунă ĕçсене пăхса тухнă. Советсен 10-мĕш съезчĕ аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшнипе Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республика палламалла мар улшăннине палăртса хăварнă. Советсен 10-мĕш съезчĕ уçăлнă тĕле республикăри хресчен хуçалăхĕсенчен 63% колхозсене пĕрлешнĕ, çак вăхăт тĕлне республикăра пайтах паха çулсем тунă, шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те пуçламĕш шкулсенче вĕрентме тытăнса, обязательнăй йĕркепе пурне те çичĕ çул вĕренмелли йĕркене пурăнăçа кĕртнĕ.

Чăваш республикин территорийĕнче çакăн пек пысăк предприятисем: Куславккапа Çĕмĕрлери йывăç касакан комбинатсем, Канашри вагонсем юсакан завод çитĕнсе ларчĕç.

Çакнашкал пур пысăк ĕçсене тунă çĕрте те Советсем тивĕçлĕ вырăн йышăнса тăнă.

Чăваш республикинчи Советсем кулленех çирĕпленсе пынă. Аслă Октябрь çуратнă республика хуçалăхпа культура енчен аталанса чечеклĕнсех пынă, çак ӳсĕм çулĕпе вăл пĕрехмай шанчăклăн малалла кайса пынă.

Конституци проектне пĕтĕм халăхпа сӳтсе-явас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Сталинла Конституци проектне рабочисемпе служащисем, колхозниксемпе единоличниксем нумайăн пуçтарăнса пухăвĕсенче хаваслăн сӳтсеявнине пурте астăваççĕ пулĕ. Республикăра пулса иртнĕ çак пухусенче пурĕ 15.200 çын тухса калаçнă. Çакă вăл пĕтĕм халăхăн савăнăçĕ, халăх хăйĕн Совет правительствине, большевиксен партине, çулпуçăмăрпа учителĕмĕре—çĕнĕ Конституци тăвакан аслă Сталина чĕререн парăнса юратса тăни пулнă.

Конституци проектне сӳтсе-явнă чухне Ишлей районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозри 54 çулхи колхозник Артемьев юлташ çапла каланă: „Эпĕ ялти кулаксем патĕнче ĕçлесе пайтах тертлентĕм, вĕсем чухăн çынсенчен сахал мар мăшкăлласа кулчĕç. Совет влаçĕ, большевиксен партийĕ, унăн çулпуçĕсем Ленинпа Сталин юлташсем пире мăшкăллă тарçă пурнăçĕнчен хăтарса, çутă та телейлĕ пурăнăç туса пачĕç“.

Тĕп законра—Конституцире çырса хунă çитĕнӳсемпе чăваш халăхĕ тивĕçлипех мухтанса савăнать.

Краснофлотец Кокшин хăйĕн çырăвĕнче акă мĕн çырнă: „Эпĕ хамăн республикăшăн, Сталинла Конституци законĕпе пурăнакан хамăн чăваш халăхĕшĕн тивĕçлипех савăнса мухтанатăп. Мана Совет влаçĕ вĕрентсе çитĕнтерчĕ. Эпĕ

11 çул хушши ача çуртĕнче пурăнтăм, Çарпа-Тинĕс флотне хам ирĕкпе кайрăм, хамăрăн çĕршывăн çурçĕрпе хĕвеланăç чиккисене хӳтĕлемешкĕн тата Ленин хулин хăрушăсăрлăхĕшĕн белофинсемпе çапăçма тивĕçлĕ пултăм. Флотра служить туса, эпĕ хам панă присягăна çирĕп асра тытатăп... Эпĕ Чăваш республикинчи мĕнпур çамрăксене отлично вĕренме, производствăра стахановла ĕçлеме, вăй-хала шеллемесĕр вăрçă ĕçне вĕренме чĕнетĕп".

1936-мĕш çулта Сталинла Конституцие йышăннă. Унта Октябрьти кĕрешӳсене пула çĕнсе илнĕ çĕнтерӳсене тата Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе Совет халăхĕ социализм строительствинче тунă калама çук пысăк çитĕнӳсене çырса çирĕплетсе хăварнă.

СССР тата РСФСР Конституцийĕсемпе пур енчен те килĕштерсе тунă Чăваш АССР Конституцине 1937-мĕш çулта июлĕн 18-мĕшĕнче пухăннă Чăваш Республикинчи Советсен Чрезвычайлă XI-мĕш съездĕнче йышăннă, ăна вара РСФСР Верховный Совечĕн III-мĕш Сессийĕнче çирĕплетнĕ. Ĕлĕкхи вăхăтра чăваш халăхĕ ĕмĕртенпех асапланса пурăннă вырăнта çĕнĕрен тунă промышленноçлă, культурăллă, коллективизациленнĕ ялхуçалăхлĕ, çĕнĕ культурăллă—форма тĕлĕшĕнчен нациллĕ, содержани енчен социализмлă культурăллă, орденлă Республика чечекленсе çитĕнчĕ. Чăваш халăхĕ Совет влаçĕнчен илнĕ хальхи телейĕ çинчен, халăхсен çулпуçĕ, аслă Сталин çинчен, ылттăн кĕнекене—Конституцие туса панă çулпуçăмăр çинчен çапла юрлать:

„Историсĕр халăх" тенĕ
Пирĕн пек халăхсене.
Тискер кайăк пек йĕрленĕ
Пире ĕмĕр-ĕмĕрне.

Чĕрене тытса вулатпăр
Иртнĕ кун кĕнекинче
Ĕмĕрсем хушши таптаннă
Халăх пурнăçĕ çинчен.

Эсĕ уçнă кĕнекемĕр
Сарăлса выртать умра:
Тискер кайăк мар мĕн эпĕр
Историйĕмĕр пурах".

Чăваш АССР Конституцийĕн 1-мĕш статьинче çапла çырса хунă: „*Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă республики рабочисемпе хресченсен социализмлă государстви пулса тăрать*".

Ĕлĕкхи вăхăтра пусмăрлăхра тата тĕттĕмлĕхре пурăннă çынсемшĕн çак статья пĕлтерĕшĕ питех те пысăк.

Конституци вăл аслă закон. Çак закон тăрăх çĕршывра пĕтĕм власть хуласемпе ялсенчи ĕççыннисен аллинче, унта колхоз стройĕ туса, хресченсен çĕр пирки ĕмĕртенпех ĕмĕтленсе пурăннине пурăнăçа кĕртнĕ, савăнăçлă ĕç туса хунă, хĕрарăмсем арçынсемпе пĕртан праваллă пулса тăнă.

Пирĕн Республикăн Конституцийĕ çине Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин гражданĕсен ĕçлев прави, кану прави, вĕренӳ прави, ватăлсан материальнăй пулăшу илмелли право пур, тесе çырса хунă. Чăваш АСС Республикинчи хĕрарăма пĕтĕм хуçалăх, государство, культура тата обществăпа политика пурнăçĕнче арçынпа пĕртан правăсем панă.

Чăваш АСС Республикинчи граждансем Конституци панă правăсемпе сарлакан усă кураççĕ.

Ирĕклĕ ĕç, социализмла ĕç тĕлĕнмелле япаласем тăвать. Çакна эпир производствăпа ялхуçалăхĕнче ĕç тухăçлăхĕ кулленех пысăккăн ӳссе пынинчен те аванах куратпăр. Çакна пире партипе Совет правительстви тăрăшса пăхса çитĕнтернĕ кадрсем те уççăнах кăтартса параççĕ.

Иртнĕ 25 çул хушшинче пирĕн ялсен сăн-сăпачĕ тĕпренех улшăнчĕ. Тĕслĕхе Вăрнар районĕнчи Кольцовка ялнех илĕпĕр. Революциччен çак ял мĕнле пулнă-ха? Кушлавăш ялĕнчи Ломоносов пуп çак ял çинчен Етĕрнери земство Управине çапла çырса панă: „Кушлавăш приходне кĕрекен Кольцовка ялĕнче арçынсемпе хĕрарăмсем пурĕ 700 çынна яхăн шутланаççĕ, ялта 160 хуçалăх, вĕсенчен 16 хуçалăхĕ кăна хăйсен тыррипе тăранса пурăнаççĕ. Тыр лайăх пулнă çулсенче те çамрăк ăру хăйĕн çемьисемпе нуша курса пурăнать, тыр нихăçан та çулталăклăха çитмест".

Хальхи вăхăтра Кольцовка ялне, унăн Сталин ячĕпе тăракан орденлă колхозне Республика тулашĕнче те пĕлеççĕ. Хальхи вăхăтра Кольцовка çыннисем пуян та культураллă пурăнăçпа пурăнаççĕ. Колхозра вăтам шкул, 300 çын вырнаçмалли клуб, почта уйрăмĕ, электростанци, ача çуратмалли çурт, ача ясли, столовăй, 5 ферма пур.

Чăваш халăхĕ хальхи вăхăтра Совет Союзĕнчи тăванлă халăхсем хушшинче пĕртан правалла член шутланса тăрать. Совет влаçĕ пулăшнипе, большевиксен партийĕ ертсе пынипе, аслă вырăс халăхĕ пулăшса пынипе, чăваш халăхĕ чухăнлăхпа тĕттĕмлĕхе тата социаллă чирсене ĕмĕрлĕхех тĕп туса хучĕ.

1913-мĕш çулта чăвашсем хушшинче пурĕ те 463 шкул

анчах пулнӑ. Хут пӗлекен ҫынсем 18% кӑна шутланнӑ. Хальхи вӑхӑтра пирӗн Республикӑн территорийӗнче 1063 шкул ӗҫлет. Вӗсенче 157.813 ача вӗренет. 6201 учитель ӗҫлет. Республикӑра Педагогика институчӗ, Ялхуҫалӑх институчӗ, Учительски институт, 30 техникум, ҫитӗннисене вӗрентмелли тӗрлӗ шкулсемпе курссем уҫнӑ. 1945-мӗш ҫулхи Республика бюджетне 186 миллион та 151 пин тенкӗ ҫирӗплетнӗ. Пӗтӗм бюджетран 96 миллион та 45 пин тенкине халӑха ҫутта кӑларас ӗҫе ярассӗ, процентпа хисеплесен, вӑл пӗтӗм бюджетӑн 51,6% пулать. Большевиксен партийӗпе Совет правительствин Ленинла-Сталинла наци политики Совет Союзӗнчи ытти халӑхсемпе пӗр танах чӑваш халӑхӗн пурӑнӑҫне политикӑпа экономика тата культура тӗлӗшӗнчен чечеклентерсе ячӗ. Чӑваш халӑхӗн халӗ хӑйӗн тӑван чӗлхипе тухса тӑракан хаҫачӗсемпе журналӗсем те пур. Марксӑн, Энгельсӑн, Ленинӑн, Сталинӑн паха произведенийӗсене чӑвашла куҫарса пичетлесе кӑларнӑ. Чӑвашӑн илемлӗ литература чӗлхине, илемлӗ литературине, форма тӗлӗшӗнчен нациллӗ, содержани енчен социализмла культурине тунӑ.

Чӑваш халахӗ хушшинчен учительсем, врачсем, инженерсем, агрономсем тата ытти специалистсем темӗн чухлӗ ӳссе ҫитӗнчӗҫ. Чӑваш интеллигенцийӗн кадрӗсем ҫулран ҫулах ӳссе пыраҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра Чӑваш республикин территорийӗнче 1075 сыватмалли учрежденисем (больницӑсем, поликлиникӑсем, фельдшерпа акушер пункчӗсем, ача ҫуратмалли ҫуртсем тата ыт. те) ӗҫлеҫҫӗ. 1913-мӗш ҫулта вӗсен хисепӗ пурӗ те 56 учреждени кӑна пулнӑ. Республикӑра чир-чӗрсенчен сыватмалли, ача амӑшӗсемпе ачасен сывлӑхне сыхлакан учрежденисем тунӑ. Ҫак хушӑрах патша Российӗнчен тӑрса юлнӑ хӑрушӑ чирсене—трахомӑпа чечче чирӗсене пӗтерес тӗлӗшпе те пысӑк ӗҫсем туса ирттернӗ. Революциччен трахомӑпа чирлекенсен хисепӗ 70—90% пулнӑ пулсан, халӗ ҫак хисепе 8% ҫити чакарнӑ.

Конституци панӑ правӑсемпе анлӑн усӑ курса, Чӑваш Автономиллӗ Советлӑ Социализмлӑ республикин гражданӗсем хӑйсен Конституцийӗн ялавне ҫӳлте тытса, тӑрӑшса ӗҫлесе пурӑнаҫҫӗ, вӗсем хӑйсен обязанноҫӗсене тӳррӗн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Чӑваш АССР Конституцин 100-мӗш статьинче: Тӑван ҫӗршыва сыхласси—Чӑваш АСС Республикин кашни гражданинӗн чи таса тивӗҫӗ пулать, тесе ҫырнӑ. Ҫак статьяна чӑваш халӑхӗн ывӑлӗсемпе хӗрӗсем тивӗҫлӗн пурӑнаҫа кӗртсе пыраҫҫӗ. Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ кунӗсенче пирӗн Республикӑри пиншер ӗҫсыннисем тӑван ҫӗр-

шыва урса кайнă тискер-кайăкла тăшманран сыхлама кайрĕç. Чăваш республики çĕршыва 37 çын Совет Союзĕн Геройне, чапа тухнă Боголюбов, Макаров, Петров, Трофимов, Марсельский, Виноградов генералсене тата нумай ытти паттăр геройсене пачĕ.

Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе Советлă Чăваш çĕршывĕ тунă аслă çитĕнӳсене Чăваш АССР Конституцийĕ çине законласа çырса, çирĕплетсе хăварнă. Пирĕн республикăшăн историллĕ вырăн йышăнса тăракан çак паллă событие ĕççыннисен сарлака масси политикăпа творчествăлла активлăхне питех те хăпартнипе кĕтсе илсе паллă турĕ.

Конституцие йышăннă хыççăн, Чăваш республикинчи Советсем СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленес анлă ĕçсем сарса ячĕç.

Суйлава хатĕрленнĕ чухне производствăсенче ĕç калама çук ӳссе пычĕ. Декабрĕн 12-мĕш кунне—СССР Верховный Советне суйлáмалли куна—пирĕн республикăри нумай предприятисем, сăмахран, Çĕмĕрлери „Большевик" завод, Вăрнарти фосфорит завочĕ, Шупашкарти спиртпа эреке завочĕ çулталăкри производство программисене пĕтĕмĕшпех тултарнипе кĕтсе илчĕç. Çак куна пирĕн стахановецсем ĕçре пысăк рекордсем тунипе кĕтсе илчĕç. Улатăрти паровозсем юсакан заводри котельщик Леонтьев 717—21-мĕш номерлă паровоз çинче пилĕк сехет çурă хушшинче 404 çыхăну головкине хăйпăтса ĕç нормине 609% тултарнă. Канашри вагонсем юсакан заводри термически пайра ĕçлекен комсомолец Орлеан смени пĕр кунхи нормăна 315,8% тултарнă. Çакнашкал примерсене питех те нумай илсе кăтартма пулать.

Чăваш халăхĕ хăйĕн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсене Верховный Совет депутатне суйлама кандидата тăратрĕ.

СССР Верховный Совет суйлавĕсем питех те пысăк çĕкленӳпе пулса иртрĕç. Совет çыннисем суйлав ещĕкĕсем (урнăсем) патне, аслă уява пынă пек, пысăк савăнăçпа пычĕç. Чăваш республикинчи суйлавçăсем коммунистсемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн çав тери пысăк хавасла сасăларĕç.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Кошкильдино ялĕнчи 80 çулхи старик Кузьмин юлташ суйлав участокĕнче çапла каларĕ: „Эпĕ Сталинла Конституцине тунă куна çити пурăннăшăн савăнатăп. Эпĕ хамăн ĕмĕрте пĕрремĕш хут вăрттăн сасăлатăп. Çакăншăн эпĕ темиçе хутчен те Сталин юлташа тав тăватăп. Эпĕ хамăрăн тивĕçлĕ ывăлсемшĕн, Тăван çĕршывăн патриочĕсемшĕн сасăлатăп, вĕсем пирĕн телейлĕ те савăнăçлă

пурӑнӑҫшӑн татах та лайӑхрах кӗрешчӗр. Сталинла Конституци тӑрӑх суйлавирттернӗ кун эпӗ колхоза кӗретӗп". Унччен колхоза кӗме ӗлкӗреймен пирӗн республикӑри хресченсем нумайӑшӗ суйлав ирттернӗ кун савӑнсах колхозсене кӗчӗҫ. Суйлав результачӗсем калама ҫук чаплӑ пулчӗҫ! Суйлава пӗтӗм суйлавҫӑсенчен 99,3% хутшӑннӑ. Суйлава пынӑ суйлавҫӑсенчен 99,1% коммунистсемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн сасӑларӗҫ.

РСФСР тата Чӑваш АССР Верховный Совечӗсен суйлавӗсене ирттерме хатӗрленес ӗҫсем те ҫакнашкал пысӑк ҫӗкленӳпе иртрӗҫ. Пӗтӗм халӑх хутшӑннӑ ҫак кампани ӗҫре стахановла ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе пуҫланса кайрӗ. Суйлав кунӗ ҫавнашкалах савӑнӑҫлӑ та уяври пек пулса иртрӗ. Чӑваш хӗрарӑмӗсем-колхозницисем суйлав участокӗсене илемлетрӗҫ, сӗтелсемпе суйлав ещӗкӗсене пурҫӑнсемпе витсе капӑрлатрӗҫ, чечек ҫыххисем илсе пырса вӗсене Сталин юлташ портречӗ патне хучӗҫ, ҫапла туса вӗсем хӑйсем хамӑрӑн партипе Сталин юлташа савса юратнине палӑртрӗҫ.

Чӑваш АССР Верховный Совет депутатне Сталин юлташа суйланӑ участока кӗрекен Канаш районӗнчи Сухайкасси ялӗнчи 73 ҫулхи старик, промартель членӗ Новожилин юлташ, 1938-мӗш ҫулхи июнӗн 26-мӗшӗнче пуҫласа малтан бюллетень илчӗ, конверта ещӗке янӑ чухне вӑл ҫапла каларӗ: „Патша вӑхӑтӗнче эпӗ, кулаксемпе помещиксем эксплоатациленисӗр пуҫне, чӑн-чӑн пурӑнӑҫа пурӑнса кураймарӑм. Халӗ эпӗ пуян та телейлӗ пурӑнӑҫпа пурӑнатӑп, ҫак телейлӗ пурӑнӑҫа пире халӑхсен ҫулпуҫӗ Сталин юлташ пачӗ, ҫавӑнпа та эпӗ, хама Сталиншӑн сасӑлама телей пулнӑшӑн, пӗтӗм чӗререн савӑнатӑп".

РСФСР тата Чӑваш АССР Верховный Совечӗсен суйлавӗсене ирттерни пирӗн халӑх моральпе политика тӗлӗшӗнчен ҫирӗп пулнине, вӑл Ленинпа Сталин партине тата Совет правительствине чӗререн парӑнса тӑнине кӑтартса пачӗ. Верховный Совет суйлавӗ Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисен никам ҫӗмӗрейми пӗрлӗхне, вӗсен пысӑк активлӑхне, вӗсем хӑйсен социализмла Тӑван ҫӗршывне чӗререн парӑннине кӑтартса пачӗ. Ҫак суйлавра суйлавҫӑсенчен 97,82% коммунистсемпе партире тӑманнисен блок кандидачӗсемшӗн сасӑларӗҫ.

Иртнӗ вӑхӑтри пурӑнӑҫ ҫине ҫаврӑнса пӑхма питех те кичем. Ун чухне кама суйланӑ-ха? Сӑмахран, 1906-мӗш ҫулта Шупашкар уесӗн Управине Эннатскине—дворянина, 273 десятин ҫӗр хуҫине Управ председателӗ пулма суйланӑ.

Пирӗн ӗҫҫыннисем хамӑр халӑхӑн ӗҫре хӑйсене палӑртнӑ, халӑх интересне сӑмахпа мар, ӗҫре сыхласа пыма пултара-

кан, ĕççыннисен интересĕсемшĕн малашне те шанчăклăн тăрăшса пыракан ывăлĕсемпе хĕрĕсене суйласа хăварчĕç.

Чăваш АССР Верховный Советне пурĕ 96 депутат суйланă. Ĕççынни депутачĕсен районсенчи, хуласенчи, ялсенчи, поселоксенчи Совечĕсене пурĕ 10715 çынна, вĕсенчен—30,7% хĕрарăмсене суйланă. Пĕтĕм депутатсенчен 46 çынна Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă. Çак суйлава иртгернĕ хыççăн выранти Советсем Тăван çĕршыва, Ленин-Сталин партине парăннă çынсемпе çирĕпленчĕç. Çакă вара вырансенчи ĕççынни депутачĕсен Совечĕсен практикăлла ĕçĕсене аванлатма, вĕсем массăсемпе çыхăнса ĕçлессине татах та лайăхлатма пулăшрĕ.

Ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем ĕççыннисен сарлака массисен творчествăллă пуçарулăхне ертсе пычĕç. Суйлав хыççăнхи çулсем хамăрăн орденлă республикăн халăх хуçалăхĕпе культура строительствинче пур енчен те пысăк çитĕнўсем тунипе паллă пулса юлчĕç.

II

Совет халăхĕн нимĕç захватчикĕсене хирĕç пулса пынă Отечественнăй аслă вăрçи государствăпа обществăллă организацисен мĕнпур ĕçĕсенче те тарăн йĕрсем хăварчĕ. Çак вăрçă çав организацисене хăйсен ĕçĕсене тĕпренех урăхлатма, вăрçă вăхăтĕнчи пĕтĕмĕшле лозунгсем:— „Пурте фронт валли! Пурте çĕнтерў валли!"—текен лозунгсем ыйтнă пек урăхлатма ыйтрĕ. Халĕ, вăрçа çĕнтерўпе пĕтернĕ хыççăн, государство влаçĕн выранти органĕсем, пĕтĕмĕшпе илсен, хăйсен умне лартнă задачăсене начар мар пурнăçланă теме пулать.

1917 мĕш çулта халăх туса хунă совет государстви, ухмаха ернĕ Гитлер шутланă пек, нимĕç çарĕсем йывăррăн пырса çапнипе арканса каймарĕ, вăл татах та ытларах çирĕпленчĕ.

„Совет государстви нихăçан та хальхи пек, Отечественнăй вăрçăн виççĕмĕш çулĕнчи пек, иксĕлми çирĕп пулман. Вăрçă урокĕсем çакăн çинчен калаççĕ: совет строй çĕршыва мирлĕ строительство çулĕсенче экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен çĕклес ĕçе организацилемелли чи лайăх форма кăна мар, вăрçă вăхăтĕнче тăшмана хирĕç тăма халăхăн мĕнпур вăйĕсене мобилизацилемелли чи лайăх форма та пулса тăчĕ". (И. Сталин).

Совет халăхĕ гитлерла Германи пек вăйлă та ултавлă тата опытлă тăшмана çĕнтерни, Совет государствин вăйхалĕ чухлĕ урăх пĕр государствăн та вăй-хал çуккине кăтартса парать. „Октябрьти революцире çуралнă социализмлă

строй пирӗн халӑхпа пирӗн ҫара аслӑ та никам ҫӗнейми вӑй-хӑват пачӗ" (И. Сталин).

Отечественнӑй вӑрҫӑ Совет влаҫне халӑхпа пӗрле татах та тачӑрах ҫыхӑнтарчӗ, Совет халӑхӗсен государство ӗҫӗнче пӗрле ҫыхӑнса ӗҫлес туслӑхне ҫирӗплетрӗ.

Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе, аслӑ вырӑс халӑхӗ тӑванла пулӑшса пынипе, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Чӑваш республикинчи Советсем, ялсенчи Советсен ӗҫне ҫӗнӗ ҫынсем, ҫак ӗҫе сахалтарах пӗлнӗ ҫынсем хутшӑннипе пулнӑ йывӑрлӑхсене пӑхмасӑрах, ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсемех турӗҫ.

Советсен ӗҫне хӗрарӑмсем те активлӑн хутшӑнса ӗҫлерӗҫ. Совет стройӗпе Ленин-Сталин партийӗ ҫӗнӗ хӗрарӑм, хӑйӗн тӑван ҫӗршывне яланлӑхах парӑннӑ хӗрарӑм,—пысӑк та аслӑ ҫӗршывӑн ӗҫчен хӗрарӑмне ҫитӗнтерсе ӳстерчӗҫ. „Ҫакнашкал хӗрарӑмсем ӗлӗкхи вӑхӑтра пулман, пулма та пултараймаӊ" (И. Сталин).

Чӑваш хӗрарӑмӗсем государство деятелӗсем пулса тӑчӗҫ. Советсен депутачӗсем хушшинче 8.000 хӗрарӑм ытла шутланаҫҫӗ, вӗсенчен 34 ҫын СССР, РСФСР, Чӑваш АССР Верховный Совечӗсен депутачӗсем пулса тӑраҫҫӗ. Районсенчи, хуласенчи, ялсенчи ӗҫҫынни депутачӗсен исполнительный совечӗсен председателӗсем, председательсен заместителӗсем тата секретарӗсем пулса пурӗ 665 хӗрарӑм ӗҫлет. Ял Совет председателӗсенчен 20%, секретарьсенчен—65% хӗрарӑмсем ӗҫлеҫҫӗ. Ҫак тӗлӗшпе уйрӑмӑнах Шупашкар хула Совечӗ палӑрса тӑрать. Кунта председатель заместителӗсем 5 ҫын, вӗсенчен виҫҫӗшӗ хӗрарӑмсем, 11 отдел заведующисенчен тӑххӑрӗшӗ хӗрарӑмсем ӗҫлеҫҫӗ. Хула совечӗн секретарӗнче те хӗрарӑмах ӗҫлет.

Ял Совечӗсен кадрӗсем палӑрмаллах улшӑнчӗҫ. Кадрсенчен хӑшӗсем Хӗрлӗ Ҫара кайрӗҫ, теприсене районсенчи ертсе пыракан вырӑнсене ӗҫлеме лартрӗҫ. Ҫара кайнӑ ҫынсем вырӑнне ӗҫлеме ҫӗнӗ ҫынсем, Тӑван ҫӗршыва парӑннӑ, халӑх шанса панӑ пысӑк тивӗҫе хӑйсем чӑнласах пурӑнӑҫа кӗртме тӑрӑшнине ӗҫре кӑтартса пама пултаракан ҫынсем кӗчӗҫ. Ӗҫе ҫӗнӗ ҫынсем кӗни малтанхи вӑхӑтра ял Совечӗсен ӗҫӗсенче чӑрмавсем-те турӗ. Анчах ҫӗнӗ условисенчи ӗҫри опытсем пухӑнсах пычӗҫ. Чи пахи вӑл ҫакӑ пулать: ҫамрӑк кадрсем хӑйсене шанса панӑ халӑх ӗҫӗшӗн большевикла тӑрӑшни, вӗсем ӗҫре ҫине тӑрсах тимлесе ӗҫлени, вӗсен ӗҫре пуҫарулӑх пурри пулать. Хӑйсен ӗҫӗсене тишкӗрсе, актив ҫине тайӑнса ӗҫлесе, массӑран вӗренсе пырса, ял Совечӗсен председателӗсенчен нумайӑшӗсем хӑйсен за-

дачисене пуранаҫа лайăх кĕртсе пыраҫҫĕ. „Ял Совет председателĕ,—тесе калать М. И. Калинин,—суйласа лартнă, власть шанса панă ҫын пулса тăрать, унтан канцеляри ĕҫне пĕлнине кăна ыйтмаҫҫĕ (канцеляри ĕҫне пĕлни те начар япала мар), унăн политика енĕпе те, культура енĕпе те ҫителĕклĕ пĕлни пулмалла, унăн вырăнти пурнăҫ ыйтăвĕсене тавҫăрса илме, ҫавăн пекех тата государство обязанноҫĕсене пурăнăҫласа пыма пĕлес пулать. Ял Совет председателĕн совет принципĕсене ĕҫре пурăнăҫа кĕртсе пымалла, ĕҫ ҫине партилле, большевикла пăхмалла". Ҫак кăтартусене шута илсе, вăрҫă вăхăтĕнче ĕҫлеме пултаракан кадрсем, уйрăмăнах ял Совечĕсенче ĕҫлеме кирлĕ кадрсем суйласа илсе, вĕрентсе хатĕрлес ыйтусем ҫине те сахал мар ҫаврăнса пăхрăмăр. Ĕҫре пулăшу парас шутпа, тĕрлĕ мероприятисем туса ирттернĕ: ял Совет председателĕсен республикăри канашлăвне пухса ирттернĕ. 1943 мĕш ҫулта 26 районта председательсен виҫĕ кунлă семинарĕсене туса ирттернĕ. Председательсем вĕрентсе хатĕрлес майпа республикăра виҫĕ уйăхлăх курс организациленĕ. 1944-мĕш ҫулта курсра пурĕ 75 ҫын вĕреннĕ. 1945-мĕш ҫулта пурĕ 200 ҫын вĕрентсе хатĕрлемелле.

Кадрсем вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе районсенче те пысăк ĕҫ туса ирттереҫҫĕ.

Шупашкар районĕнчи Совет исполкомĕ ял Совечĕсенче ĕҫлекенсен политикăлла пĕлĕвне хăпартас тĕлĕшпе тăтăшах ĕҫлет: кунта вăхăтран-вăхăта яланах председательсемпе секретарьсен семинарĕсене пухса ирттереҫҫĕ, ҫак семинарсенче политика тата совет строительстви ыйтăвĕсемпе докладсем тăваҫҫĕ. Ял Совет председателĕсемпе секретарĕсен семинарĕсене Ишлей, Тăвай тата Комсомольск районĕсенче те час-часах пухса ирттереҫҫĕ.

Вăрҫă депутатсен ответлăхне нумай ӳстерчĕ. Халăх суйланă ҫынсем, Сталин кăтартса панисене асра тытса, государство ĕҫĕнче активлăн ĕҫленипе хăйсен халăх шанса панă ĕҫе пурăнăҫласа пыраҫҫĕ. Халăх суйласа лартнă ҫынсенчен чылайĕшĕсем Хĕрлĕ Ҫара, тăшманпа ҫапăҫса хамăр Тăван ҫĕршывăн чыслăхне, унăн ирĕклĕхĕпе никамапăхăнманлăхне хӳтĕлеме кайрĕҫ. Нимĕҫсен фашистла захватчикĕсене хирĕҫ пынă вăрҫăра Чăваш АССР Верховный Совет депутачĕсем 15 ҫын, районсемпе хуласенчи, поселкăсемпе ялсенчи Советсен депутачĕсем 4666 ҫын пулнă. Верховный тата вырăнти Советсене суйланă депутатсем нимĕҫсен фашистла захватчикĕсене хирĕҫ пынă вăрҫăра пĕрре кăна мар паттăрлăх тата ҫар ĕҫĕн мастерлăхне кăтартрĕҫ. Чăваш

АССР Верховный Совечĕн депутачĕсем Спасов, Толстов, Немцев юлташсем боевой заданисене лайăх пурнăçланăшăн правительство наградисене илнĕ. Вăрçă пуçланнă малтанхи кунсенчен тытăнсах Чăваш АССР Верховный Совет депутачĕ Журавлева юлташ фронтра связистка пулса çапăçрĕ. Чăваш АССР Верховный Совет депутачĕсем Белоруссовпа Куликов юлташсем вăрçă хирĕнче паттăрсен вилĕмĕпе вилчĕç.

Тылра юлнă депутатсен вăрçă вăхăтĕнче промышленноçпа ялхуçалăхĕнче ăнăçлă ĕçлессишĕн, государство ĕçĕсене пур енчен те лайăх туса пырассишĕн ответлăхĕ питех те ӳсрĕ. Ĕççынни совечĕсен депутачĕсем хăйсен депутат обязанноçĕсене тӳр кăмăлпа пурнăçласа пыраççĕ, вĕсем фабрикăсемпе заводсен, колхозсемпе шкулсен ĕçĕсене лайăх ертсе пыраççĕ, çакăнпа пĕрлех вĕсем государство ĕçĕсене те нумай туса пыраççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче хĕрарăм-депутатсенчен нумайĕшне ответлă ĕçсене куçарса лартнă: пуçламĕш шкулта учительница пулса ĕçленĕ А. И. Воронцова Социальни Обеспечени Халăх Комиссарне çити ӳсрĕ. Дмитриевăпа Бычкова юлташсем районри Совет председателĕсен заместителĕсем пулса ĕçлеççĕ. Виноградова депутат, 1942-мĕш çул пуçламăшĕнчех тытăнса, Калинин районĕнчи Ермошкино ял Советне кĕрекен Пушкин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Вăл депутат обязанноçĕсене тӳр кăмăлпа пурнăçласа пырать, хăйне суйлана çынсемпе яланах çыхăну тытса тăрать, вăл пĕр вăхăтрах Калинин районĕнчи совет депутачĕ пулса, Райсовет исполком решенийĕсене яланах суйлавçăсем патне çитерет, ĕççынни массисем хушшинче ăнлантару ĕçне анлăн туса пырать, колхозниксене заданисене пурнăçлама мобилизацилет. Колхозниксем валли вăл агротехника кружокĕ организациленĕ, колхозниксем кашни эрнерех клуба пухăнса, ялхуçалăх ыйтăвĕсемпе специалистсем вулакан лекцисене итлеççĕ. Колхозниксен массине ĕçе пĕлсе мобилизацилесе, вăл ялхуçалăх ĕçĕсене темиçе çул хушши ĕнтĕ районра чи малтан туса ирттерет. 1944-мĕш çулта кунта уй-хирти тырпулсене вăхăтра пухса кĕртсе çапса пĕтернĕ, государство поставкисен планĕпе общеcтвăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетмелли плана тултарнă. Колхоз 1945-мĕш çулхи çуракине те лайăх хатĕрленсе, ăна ăнăçлăн ирттерчĕ. Чăваш АССР 25 çул тултарнă ятпа Виноградова юлташ колхозăн шыв арманĕ çумĕнче шывпа ĕçлекен электростанци туса лартать.

Смирнова депутат 1934-мĕш çултанпа Çĕнĕ Патирек ял Совечĕн председателĕ пулса ĕçлет.

Шупашкар районĕнчи Совет депутатне В. Е. Егоров юлташа 1942-мĕш çулта Хĕрлĕ Çар ĕретне илнĕ. Боевой заданисене ăнăçлăн пурăнăçланăшăн ăна „За отвагу" медальпе наградăланă. Вăрçăра аманнă хыççăн вăл, киле таврăнсан, хăйĕн суйлавçисемпе тăтăшах ĕçлеме тытăнчĕ.

Улатăрти хула Совечĕн депутачĕ Е. Ларкина юлташ та пысăк ĕçсем тăвать. Вăл шкулсем тĕлĕшĕпе ялан ĕçлекен комиссинче тăрăшса ĕçлет, вăл уйрăмăнах шкул ачисемпе çар çыннисен ачисене пулăшас тĕлĕшĕпе ĕçлет. Ашшĕ амăшĕсем фронтра вилнĕ тăлăх ачасене вăл ача çуртĕсене вырнаçтарнă. Ăна тăрăшса ĕçленĕшĕн тĕрлĕ организацисем сахал мар премиленĕ.

Шупашкар хула Совечĕн депутачĕ К. А. Арзамасова юлташ, врач пулса тата халăх сывлăхне упрас тĕлĕшпе ĕçлекен яланлăх комиссинче ĕçленĕ хушăрах, Шупашкар хулинчи ĕççыннисен сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе туса ирттерекен пур ĕçсене те хавасланса тăвать. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна Шупашкар хула совечĕ сывлăха сыхлав пай заведующи пулса ĕçлеме лартнă. Хăйĕн ĕçне тӳр кăмăлпа туса пынăшăн ăна Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă.

Шупашкар хула Совечĕн депутачĕ А. Столярова юлташ темиçе çул хушши хăйĕн суйлавçисемпе тачă çыхăну тытса тăрать, вăл хăйĕн суйлавçисемшĕн кулленех тăрăшать. Ун патне суйлавçăсем ачасене яслисене, ача сачĕсене, санаторисене вырнаçтарас пирки, вут, урана тăхăнмалли япаласемпе тумтирсем илес пирки тĕрлĕ канашсем ыйтма пыраççĕ. Столярова юлташ икĕ комиссинче—администраципе оборона енĕпе ĕçлекен комиссинче ĕçлет, вăл çакăнта та хăйĕн активлăхне кăтартса пырать.

Государство заданийĕсене пурăнăçласа пынипе пĕрлех, депутатсем суйлавçăсем хушшинче те ĕçлеççĕ, вĕсене хăйсем епле ĕçлени çинчен отчетсем туса параççĕ. 1944-мĕш çулта Йĕпреç районĕнчи ял Совечĕсен депутачĕсенчен 95,5%, Элĕк районĕнче—90%, Вăрнар районĕнче—84,5%, Шупашкар районĕнче—81,2% хăйсен суйлавçисене епле ĕçлени çинчен отчетсем туса панă. 1944-мĕш çулта пурĕ 2613 депутат отчет туса панă.

Депутатсем отчет тунă пухусене ял Совечĕсенче суйлавçăсем чылай нумайăн пухăннă, сăмахран, Калинин районĕнче отчет пухăвĕсене суйлавçăсенчен 92,5%, Элĕк районĕнче — 91,5%, Йĕпреç районĕнче — 89,2%, уйрăм ял Совечĕсенче суйлавçăсенчен 100% пынă. Чăваш республикинче

отчет пухăвĕсенче пурĕ 185.752 çын, вĕсенчен 138.127 çын хĕрарăмсем пулнă.

Ял Совечĕсен депутачĕсем отчетсем туса пани Советсен ĕçĕсене самаях чĕртсе ячĕ, çакан хыççăн Советсем çумĕнче организациленĕ 1301 комисси çĕнĕрен ĕçлеме пуçларĕ.

Депутатсен отчечĕсем колхозлă ялсенчи ĕçе çĕклесе ячĕç. Ăçта депутатсем отчетсем тунă, çавăнта колхозниксен массисене çуракипе çуллахи ялхуçалăх ĕçĕсене туса иртерме мобилизацилес ĕçсем те ăнăçлăн пулса иртнĕ. Вăл вырăнсенче фронта пулăшас тата заготовкăсем тĕлĕшпе государство панă заданисене те ытти вырăнсенчен авантарах тултарса пынă.

Советсене ĕçре ялан ĕçлекен комиссисем те пысăк пулăшусем парса пыраççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче çак комиссисем хăйсен ĕçĕсене самаях аванлатрĕç, вĕсем хăйсен ĕçне актива анлăн хутшăнтарчĕç, уйрăмăнах комиссисенче хĕрарăмсен ролĕ ӳсрĕ. 1940-мĕш çулта ялсенчи Советсем çумĕнче ялан ĕçлекен комиссисем 1891 пулнă пулсан, 1944-мĕш çулта вĕсен хисепĕ 2091 комиссие çитрĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă районсенчипе ялсенчи Советсен организациллĕ рольне ӳстерчĕ. Депутатсем, чи лайăх активистсем, Хĕрлĕ Çара кайнă пулин те, Советсен составĕсенче пысăк улшăнусем пулнă пулин те, Советсен ĕçĕсем пĕрре те чакмарĕç, вĕсен дисциплини те çирĕпленсех пычĕ. Ĕçре чăннипех урăхла пулса тăчĕ: çынсем ытларах та лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕç, кашни çын хăйĕн участокĕнчи ĕçшĕн ответ тытасси хăпарчĕ. Советсем хăйсем умне лартнă задачăсене, вĕсем мирлĕ вăхăтри задачăсенчен темиçе хут йывăр та кăткăсрах пулнă пулин те, калама çук ăнăçлăн пурăнăçларĕç.

Совет патриотизмĕн туйăмĕпе пурăнакан колхозри хресченсем пĕр тĕллев — тăшмана çĕмĕрсе тăкас тĕллев тытса, колхозсене татах çирĕплетес, çĕршывпа фронта продовольствисем, промышленность валли чĕртаварсем ытларах парас тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлерĕç.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем аслă Ленин: „Вăрçă пурĕ-пĕрех пуçланчĕ пулсан, йăлтах вăрçă валли, кирек те мĕнле сӳрĕк ĕçленине тата мĕнпур вăйран ĕçлеменнине вăрçă вăхăтĕнчи закон тăрăх айăпламалла,“ тесе кăтартса хăварнисене çине тăрсах пурăнăçа кĕртсе пычĕç.

„Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никамапăхăнманлăхне сыхласа хăварас тесе эпир тунă аслă жертвăсем, вăрçă пынă вăхăтра пирĕн халăх тӳссе иртternĕ йывăрлăхсем-

пе хĕнхурсем, Тăван çĕршыва хӳтĕлесе хăварас тесе тылра тата фронтра хĕрӳллĕн ĕçлени,—çаксем пурте ахаль пулмарĕç, тăшмана пĕтĕмпех çĕнтерниле вĕçленчĕç" (И. Сталин).

Чăваш республикинчи Советсем партипе правительствăн пур заданийĕсене те тултарчĕç, çакна эпир нумай примерсем тăрăхах куратпăр.

Вăрçă вăхăтĕнче Чăваш республикинчи Советсем вырăнти промышленноçа тата коопераци промышленноçне аталантарас ĕç çине те пысăккăн çавăрăнса пăхнă. Вăрçăччен промысла кооперацийĕпе районри промышленность ĕççынни нушисем валли çеç продукци туса кăларнă пулсан, вăрçă условийĕсенче вĕсен фронт нушисем валли те кирлĕ продукцисем туса кăлармалла, çав хушăрах халăха кирлĕ промтоварсем те туса кăлармалла пулнă. Отечественнăй вăрçă çулĕсенче районсемпе хула Совечĕсем вырăнти промышленноçпа коопераци промышленноçĕсене ертсе пырас ответлăха самаях хăпартрĕç, çак ĕçре вĕсенчен нумайĕшĕсем пысăк çитĕнӳсемех турĕç. Сăмахран, Канаш хулин Совечĕ кулленех промышленность ыйтăвĕсемпе интересленсе пычĕ. Кунта хулари предприятисем хушшинче социализмла ăмăртăва анлăн сарса янă, хула Совечĕ ăмăрту ĕçĕ мĕнле пынине кашни уйăхрах тĕрĕслесе сӳтсе-яватъ.

Хула Совечĕ кулленех тĕрĕслесе пынине пула, 1944-мĕш çулхи производство планне хулари предприятисем 1944-мĕш çулта пурне те кирлĕ таварсем туса кăларас енĕпе вăхăтра пурăнăçларĕç. Уйрăмăнах апат-çимĕç промышленноçĕ енĕпе—172,5%, вырăнти промышленность енĕпе—150,7%, промысла коопераци енĕпе—100% тултарчĕç.

Шупашкар хула Совечĕ 1944-мĕш çулта вырăнти промышленность ыйтăвĕсемпе тăтăшах ĕçлерĕ. Çакна пула нумай эртельсем хайсен ĕçĕсене аванлатрĕç.

Советсем колхозсене çирĕплетес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç. Вĕсем ертсе пынипе, колхозниксемпе колхозсем вăрçă пынă вăхăтри çулсенче тырпул, аш-какай тата çĕршывпа фронта кирлĕ ытти продуктсем парас тĕлĕшĕпе государство умĕнчи обязательствăсене тӳр кăмăлпа тултарса пычĕç. Колхозниксемпе колхозсем çакна ĕçри пысăк йывăрлăхсене çĕнтерсе, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстернипе турĕç.

1943-мĕш çулта Чăваш республикинчи колхозсемпе колхозниксем тырă парас плана тултарнă хыççăн, государствăна планран ирттерсе 2500000 пăт тырă сутрĕç. Колхозсем 1944-мĕш çулхи ялхуçалăх çулне те ăнăçлăн вĕçлесе, государствăна тырă пĕтĕмпех парса татрĕç. Вăрçă пынă

тăвată çул хушшинче Чăваш республики, малтанхи 5 çул хушшинчипе танлаштарсан, государствăна 6,5 миллион пăт ытла тырă пачĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи условисенче государствăна тырпул парас заданисене ăнăçлăн тултарса пыни, тăшмана çĕнтерес ĕçре уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса, фронтри ĕçпе пĕрех шутланать. Çакна шута илсе, 1944-мĕш çулта государствăна тырă парас плана ăнăçлăн тултарнăшăн республикăрипе районсенчи ертсе пыракан ĕçсенче ĕçлекен работниксене пурĕ 51 çынна Правительство Отечественнăй вăрçăн 1-мĕшпе 2-мĕш степенлĕ орденĕсене парса наградăларĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи çулсенче Чăваш республики выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата тырпул тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе çитĕнӳсем тунине икĕ хутчен палăртса, Союзлă правительство пирĕн республикăна Государство Оборона Комитечĕн Куçса Çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пачĕ. Верховный Главнокомандующий Сталин юлташ вăрçă вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çарăн боевой техникине вăйлатма укçа-тенкĕ пухас ĕçе активлăн хутшăннăшăн пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсене виçĕ хутчен саламласа тав турĕ.

Ĕçри йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, Советсем ялхуçалăх ĕçĕсене ертсе пырас тĕлĕшпе паха опытсем пухрĕç. Районсенчипе ялсенчи Советсене ертсе пыракан работниксем государство заданийĕсене вăхăтра тултарассишĕн кĕрешес ĕçе колхозниксене чăнласах тивĕçлĕн мобилизацилеме вĕренсе çитрĕç. Çак тĕлĕшпе Вăрнар районĕ лайăх примерсем кăтартса парать, вăл 1944-мĕш çулта кашни гектартан вăтам шутпа 13,9 центнер тĕштырă туса илчĕ.

Çак районри Сталин ячĕпе тăракан орденлă колхозра кашни гектартан вăтам шутпа 22 центнершар тĕштырă туса илнĕ. Кунта Леонтьев юлташ бригади кашни гектартан 35,4 центнер тырă илчĕ. 1944-мĕш çулхи ĕçсене лайăх вĕçленĕшĕн Вăрнар районĕ Государство Оборона Комитечĕн тата Чăваш ВКП(б) Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Куçса Çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илчĕ. Шупашкар, Красноармейски, Çĕрпӳ, Калинин, Етĕрне, Сĕнтĕр тата ытти районсем те ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕç.

Вăрçă умĕнхи çулсенче кая юлса пынă Куславккапа Октябрьски районсем те хăйсен умне лартнă задачăсене ăнăçлăн пурăнăçлама пуçларĕç.

Ĕçри пысăк йывăрлăхсене пăхмасăрах, Советсем общественнăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетес ĕçре те çитĕнӳсем турĕç. 1944-мĕш çулта, 1940-мĕш çултипе танлаштарсан, колхозсенче выльăх-чĕрлĕхсен хисепĕ мăйракаллă шултра выльăхсем тăрăх

73,6%, сыснасем тăрăх 32% ытларах, сурăхсем тăрăх 119,4% ӳсрĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Совет 1944-мĕш çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тăрăшсах ĕçлерĕ, вăл обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана çине тăрсах пурăнăçларĕ. Асăннă çулхи июнь уйăхĕнче районри Совет сессийĕ „1944-мĕш çулта обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетес майпа туса ирттермелли мероприятисем“ çинчен уйрăм ыйту сӳтсе-яврĕ. Çак сессире колхозсенче пулнă тĕрлĕ çитменлĕхсене палăртнă. Сесси колхоз фермисен ĕçне тĕпренех аванлатма хушса хăварнă. Вăл районри Совета, Райçĕрĕç пайне тата ял Совечĕсене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ăнăçлăн тултарассишĕн, выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне хăпартассишĕн колхозсемпе фермăсенчи работниксем хушшинче социализмла ăмăртăва анлăн сарса яма хушса хăварнă.

Ял Совечĕсемпе колхозсем, район Совечĕн çак решенине çине тăрсах пурăнăçласа пырса, 1944-мĕш çулта обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарчĕç, район вара Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн Куçса Çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илчĕ.

Колхозсенчи выльăх-чĕрлĕхсене ĕрчетес тĕлĕшпе Çĕрпӳ, Куславка, Октябрьски, Чурачăк районĕсем лайăх ĕçлерĕç. Вăрçă çулĕсенче Çĕрпӳ районĕнче выльăх-чĕрлĕхсен хисепĕ самаях ӳсрĕ. 1941-мĕш çулхипе танлаштарсан, районра мăйракаллă шултра выльăхсен хисепĕ 300,5%, сыснасен хисепĕ 188,3%, сурăхсен хисепĕ 436,5% ӳсрĕ. Çĕрпӳ районĕнчи „Ĕмĕт“ колхоз, Октябрьски районри „Аниш“ колхоз, Ишлей районĕнчи „Пархи-касси“ колхоз, Калинин районĕнчи „Броневик“ колхоз, Сĕнтĕр районĕнчи „Новый путь“ колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, вĕсен продуктивноçне хăпартас плана ăнăçлăн пурăнăçланăшăн Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Куçса Çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илчĕç.

Калинин районĕнче пурĕ 30 депутат суйланă. Вăрçă пуçлансанах фронта 12 депутат кайнă, виçĕ депутат тĕрлĕ сăлтавсене пула тухса кайнă пулсан та, ырăнта юлнă депутатсем тылри массăсене ĕçе мобилизацилес тĕлĕшпе хайсен ĕçĕсене тӳррĕн туса пычĕç.

Районсенчи Советсен депутачĕсем партипе правительство решенийĕсене пурăнăçлас ĕçре ял Совечĕсемпе колхозсене активлăн пулăшса пыраççĕ. Учительница, „Знак почета“ орден илнĕскер, Совет депутачĕ А. С. Васильева юлташ, ĕççыннисем хушшинче активлăн ĕçлет. Вăл хăйне суйланă округри колхозсемпе ял Совечĕсене пулăшса пырать, суйлавçăсем хушшинче яланах массăллă ăнлантару ĕçне туса пырать.

Районри Совет тĕрĕс ертсе пынипе, районри ял Совечĕсем хăйсене панă заданисене ăнăçлăн тултарса пыраççĕ. Чăваш республикинчи уйрăм ял Совечĕсем, ялан ĕçлекен комиссисем урлă актива мобилизацилесе, ĕçре пысăк çитĕнўсемех турĕç. Калинин районĕнчи Хăмăш ял Совечĕ вăрçă вăхăтĕнче малта пыракан ял Совечĕ пулса тăчĕ. Çак ял Советне виçĕ ялпа виçĕ колхоз, çичĕ çул вĕренмелли шкулпа пуçламĕш шкул тата трахома пункчĕ кĕреççĕ. Ял Совечĕн 17 депутачĕсенчен 10 депутачĕ фронта кайнă. Тыла юлнă депутатсем пысăк ĕçсем туса ирттернĕ, çакна пула колхозсем хăйсене панă заданисене ăнăçлăн тултарса пынă: унти колхозсем 1944-мĕш çулхи çуракине лайăх хатĕрленсе, ăна лайăх кăтартусемпе ирттернĕ, уйри тырпулсене вăхăтра пухса кĕртсе, кашни гектартан 12 центнер тырă илнĕ. „Новый путь" колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 16 центнер тырă туса илчĕ. Çак колхоз государствăна памалли заданисене вăхăтран малтан тултарса, государствăна 428 центнер тырă пачĕ. „Броневик" колхоз 1944-мĕш çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ăмăртса ĕçленишĕн иккĕмĕш хут Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Хĕрлĕ Ялавне илчĕ.

Хăмăш ял Совечĕ 1944-мĕш çулхи финанс планне 170%, 1945-мĕш çулхи пĕрремĕш квартал планне мартăн 15-мĕшĕ тĕлне 115% тултарчĕ. Çак ял Совечĕ ытти ыйтусем тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлет. Ял Советне кĕрекен шкулсем вĕренў çулне пур енчен те хатĕрленсе кĕтсе илчĕç, шкулсене юсарĕç, çителĕклĕ таран вутă хатĕрлерĕç. Кунта трахома пункчĕн ĕçĕсене аванлатас пирки те лайăх условисем тунă. Ял Советне кĕрекен ялсенче профилактика ĕçĕсене те аванлатнă, ялсенче çулçўренсене кĕрсе çывăрмалли виçĕ çурт пур.

Кунта фронта пулăшас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем туса ирттернĕ.

Ял Совечĕсем ĕçре пĕлсе ертсе пынипе Калинин районĕнчи колхозсем вăрçă вăхăтĕнчи çулсенче яхуçалăх ĕçĕсене яланах ăнăçлăн вĕçлесе пычĕç, çакна пула район республикăра малта пыракан районсен шутне кĕчĕ, унăн çитĕнĕвĕсене Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕ те палăртрĕç.

Шупашкар районĕнчи Шăмăршă ял Совечĕн вăрçă умĕн чылаях çитменлĕхсем пурччĕ. Вăрçă вăхăтĕнче ĕçсене урăхлатнине, тата колхозсене ертсе пырассине аванлатнине пула, çак ял Советне кĕрекен колхозсем партипе правительство заданийĕсене ăнăçлăн тултарса пыма

тытӑнчӗҫ. Ҫак ял Совечӗ ӗҫре ҫитӗнӳсем туни унӑн председателӗ Демьянов юлташ: „ял Совет председателӗ Совет влаҫӗн куҫӗ пулса тӑрать“, тесе М. И. Калинин юлташ каланине тарӑнӑн ӑнланса илнинчен нумай килчӗ. Кунта ял Совечӗн заседанийӗсене вӑхӑтра пухса ирттереҫҫӗ, комиссисем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ, вӗсен ӗҫне актива хутшӑнтараҫҫӗ, пур ӗҫсене те ялти интеллигенципе колхозниксем хутшӑнса пыраҫҫӗ. Ӗҫри лайӑх кӑтартусенчен пӗри вӑл Демьянов юлташ час-часах колхозсенче пулса, ӗҫри ҫитменлӗхсене вырӑнтах пӗтерсе пыни пулать.

Агротехника мероприятийӗсене вӑхӑтра пурӑнӑҫланипе, Шӑмӑршӑ ял Советӗнчи колхозсем тӗштырпа пахча-ҫимӗҫсен тухӑҫлӑхне хӑпартас тӗлӗшпе пысӑк ҫитӗнӳсемех турӗҫ. 1943-мӗш ҫулта кунти колхозсен акмалли ҫӗр талккӑшӗн 35% ҫине ҫӗрулми лартса, кашни гектартан вӑтам шутпа 135 центнер, уйрӑм участоксем ҫинчен кашни гектартан 290 центнер ҫӗрулми кӑларса илнӗ. 1943-мӗш ҫулта колхозсем, государство заданийӗсене тултарса, планран ирттерсе 153 тонна тырӑ пачӗҫ, вӗсем ҫак тырра районри колхозсенчен чи малтан кайса леҫрӗҫ. Юлашки икӗ ҫул хушшинче кунта колхозсем обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес плана ытлашшипех тултарса, выльӑх-чӗрлӗхсен хисепне чылаях ӳстерчӗҫ. Кунти колхозсем 1944-мӗш ҫулта та государствӑна тырӑ парас плана тултарса, Хӗрлӗ Ҫар фондне 29 тонна тырӑ, 321,44 центнер ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫсем пачӗҫ. Ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн вӗҫлесе, колхозсем выльӑх-чӗрлӗхсене хӗл каҫарма та аван хатӗрленчӗҫ.

Ял Совечӗ культурӑпа ҫутӗҫ организацийӗсен ӗҫӗсене аванлатас енӗпе те тӑрӑшса ӗҫлет. Шкулсем вӗренӳ ҫулне пур енчен те хатӗрленсе кӗтсе илчӗҫ: шкулсене юсарӗҫ, вутӑ ҫителӗклӗ таранах хатӗрлесе хучӗҫ, ирхи апатсем организацилерӗҫ, фронтовиксен ачисемпе тӑлӑха тӑрса юлнӑ ачасене пулӑшаҫҫӗ. Шкул ҫулне ҫитнӗ ачасем пурте шкула ҫӳреҫҫӗ.

Сывлӑха сыхлас енӗпе те кунта тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Акушер пункчӗ валли ҫӗнӗ ҫурт тунӑ, ӑна валли кирлӗ инвентарьсемпе медицина работникӗсене тупса панӑ.

Санитари енӗпе ӗҫлекен уполномоченнӑйсем медицина работникӗсемпе тата активпа пӗрле колхозниксен ҫурчӗсене, мунчасене тӗрӗслеҫҫӗ. Кунта йывӑр ҫын арӑмсене аван пӑхаҫҫӗ, пулӑшусем параҫҫӗ.

Ял Совечӗ хӑйӗн заседанийӗсенче акушер пункчӗ епле ӗҫлени ҫинчен яланах итлесе сӳтсе-явать. Ял Совечӗ ҫумӗнче организацилеӗ ялан ӗҫлекен комисси те акушер пункт-

не ĕçре нумай пулăшать, урамсене таса тытнипе тытманнине тĕрĕслесе тăрать.

Çак ял Совечĕ çумĕнчи бюджет комиссийĕ лайăх ĕçлет. Çакна пула кунта укçа-тенкĕ мобилизацилес тата бюджета тултарас ĕçсем аван пурăнăçланса пыраççĕ.

Элчĕк районĕнчи Ишмурзино-Сурински ял Совечĕ паллă вырăн йышăнса тăрать, унăн председателĕ пулса 1937-мĕш çултанпа Гарифуллин юлташ ĕçлет. Темиçе çул хушши вăл партипе правительство заданийĕсене çарти пек тултарса пырать. Ял Совечĕ аван ĕçленине пула, кунта кĕрекен ялсем çулсемпе кĕперсене те юсавлă тытса тăраççĕ.

Ял Совечĕ социализмла ăмăртăва анлăн сарса пырса, депутатсемпе актив пулăшнине пула тата комиссисен ĕçне лайăх организациленине пула, ĕçре пысăк çитĕнӳсем турĕ. Ял Совечĕ çумĕнчи бюджет, ялхуçалăх, культурăпа çутĕç комиссисем хăйсен ĕçĕсене план тăрăх туса пыраççĕ. Вĕсем хăйсен заседанийĕсенче яланах кулленхи ыйтусене сӳтсеяваççĕ, хăйсем хускатнă ыйтусене вара вĕсем ял Совет заседанинче сӳтсе-явма параççĕ.

Пур ĕçсене те ăнăçлăн туса пынăшăн, хуçалăх ыйтăвĕсене вăхăтра татса панăшăн ял Совечĕ 1943-мĕш çулта Чăваш АССР Верховный СоветПрезидиумĕн „Республикăри малта пыракан ял Советне“ ятлă Куçса Çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илчĕ.

Çĕрпӳ районĕнчи Вĕрмер ял Совечĕ те (председателĕ Н. Д. Елисеева юлташ) хăйĕн ĕçĕсене аван туса пырать. Çак ял Советĕнчи колхозсем, ял Совечĕ ĕçре вăхăтра пулăшса пынине пула, государство заданийĕсене, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана, ăнăçлăн тултарчĕç. Вĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе майракаллă шултра выльăхсем тăрăх—126%, сурăхсем тăрăх—147%, сыснасем тăрăх—118% плана тултарчĕç.

Ял Совечĕ хăйĕн ĕçне план тăрăх туса пырать. Унăн 22 çын актив пур, вăл актив ял Советне ĕçре пысăк пулăшу парса пырать. Уйрăм активистсене колхозсенчи бригадăсем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем вара бригадăсенче стена хаçачĕсем, боевой листоксем калараççĕ, социализмла ăмăрту ĕçне организацилеççĕ, ытти ĕçсене те туса пыраççĕ. Ял Совет председателĕ Елисеева юлташ, пур ĕçре те хăй малта пырса, массăна ĕçе лайăх пĕлсе организацилесе пырать.

Куславкка районĕнчи Аманик ял Совечĕ малта пыракан ял Совечĕ пулса тăрать. 1944-мĕш çулта, çураки ĕçне лайăх организацилесе ирттернипе тата агротехника правилисене лайăх пурăнăçланипе, Аманик колхозĕ пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ. Вăл кашни гектартан 16 центнер ыраш,

21,61 центнер урпа, 18,43 центнер сӗлӗ, 165 центнер ҫӗрулми, 174 центнер купӑста, 145 центнер помидор туса илчӗ. 1943-мӗш ҫулта ҫак колхозра тырпул тухӑҫлӑхӗ вӑтам хисеппе кашни гектартан 13-шер центнер тухнӑ пулсан, 1944-мӗш ҫулта кашни гектартан 15,98-шер центнер илнӗ. Ӗҫре ҫитӗнӳсем пулни ял Совечӗ лайӑх ертсе пынинчен те нумай килчӗ. Ял Совет председателӗ пулса кунта „За отвагу" медальпе наградӑланӑ Русскин юлташ ӗҫлет. Вӑл уйрӑмӑнах ялхуҫалӑх ыйтӑвӗсем ҫине хытӑ ҫавранса пӑхать. Ҫавнашкалах колхоза ялхуҫалӑх комиссийӗ пулӑшса тӑнӑ, вӑл ӗҫсен пахалӑхне тӗрӗслес енӗпе пысӑк пулӑшу парса пынӑ.

Колхозра выльӑх-чӗрлӗхсене пӑхас тата вӗсене сыхласа хӑварас ӗҫсене лайӑх организациленӗ, кунта выльӑх-чӗрлӗхсем валли лайӑх ҫуртсем туса, ҫителӗклӗ таран апат хатӗрленӗ, фермӑсенче ҫирӗп йӗрке тунӑ.

Ял Совет депутачӗсемпе ялхуҫалӑх комиссин членӗсем яланах выльӑх-чӗрлӗх апачӗсене епле расходланине тӗрӗслесе тӑраҫҫӗ. Ҫакна пула колхоз 1944-мӗш ҫулта обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана пур выльӑхсем тӑрӑх та, ялхуҫалӑх продуктисем государствӑна памалли плана та тултарчӗ.

Ял Совечӗ тата шкулсем енӗпе ӗҫлекен комисси культурӑпа ҫутӗҫ учрежденисем тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Шкул валли вутӑ ҫителӗклӗ таран хатӗрлесе хунӑ, шкула вӑхӑтра юсанӑ. Шкул ҫулне ҫитнӗ ачасене пурне те шкула ҫӳреме майсем туса панӑ.

Кунта 300 ҫын вырнаҫмаллӑх пысӑк вулав ҫурчӗ туса лартнӑ. 1944-мӗш ҫулта ҫак вулав ҫуртӗнче 47 лекципе калаҫу туса ирттернӗ, кашни уйӑхрах стена хаҫачӗ тухса тӑрать, колхозниксен килӗсене 60% радио кӗртнӗ.

Актив, депутатсем, ял Совечӗ ҫумӗнчи комиссисем тӑрӑшса ӗҫленине пула, 1944-мӗш ҫулта „Динамо" колхозӗнче ӗҫкунӗсем ӗҫлесе илес тӗлӗшпе минимума тултарман пӗр колхозник та пулман. Кунта уйрӑм колхозниксен хуҫалӑхӗсем 800—1000 ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнӗ. Сӑмахран, Отечественнай вӑрҫӑ инваличӗ Иванов ҫемьинче ӗҫлеме пултаракан виҫӗ ҫын пурӗ 1171 ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнӗ, фронтовик Белов арӑмӗ пӗччен 835 ӗҫкунӗ тунӑ.

Лайӑх ӗҫленӗшӗн Аманик ял Совечӗ 1944-мӗш ҫулта Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн „Республикӑри малта пыракан ял Советне"—ятлӑ Куҫса Ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илчӗ.

Канаш районӗнчи Асхва ял Совечӗ те, Чурачӑк районӗнчи Енших-чуллӑ ял Совечӗ те, Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Ольдеево ял Совечӗ те лайӑх ӗҫлеҫҫӗ.



3. З. А. Андреева.

Пĕтĕм Совет халăхĕпе пĕрле пирĕн республикăри ĕçсыннисем те пĕтĕм вăя хурса фронта епле пулсан та ытларах пулăшма тăрăшрĕç. Фронта вĕсем тĕрлĕ майсемпе пулăшса пычĕç, вĕсем уйрăмăнах фронтовиксен çемьисемшĕн хытă тăрăшрĕç. Партипе Совет правительстви фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшас ĕçе государствăн чи паха задачи вырăнне хурса шутлаççĕ, мĕншĕн тесен фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшни вăл Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшни пулса тăрать.

Районсенчипе ялсенчи Советсем, колхозсем фронтовиксен çемьисен нушисене кулленех шута илсе пыраççĕ, пулăшса тăраççĕ, вĕсене пособи тата пенси укçисене вăхăтра параççĕ, çемьери ĕçлеме пултаракан çынсене ĕçе вырнаçтараççĕ, урана тăхăнмалли япаласемпе çие тăхăнмалли тумтирсем тата кĕпе-йĕмсем илес тĕлĕшпе те пулăшу параççĕ. Колхозсем фронтовиксен çемьисене çуртсем лартса панă, вĕсен пӳрчĕсене юсанă.

Фронтовиксен çемьисен материаллă пурăнăçне лайăхлатса пырас тĕлĕшпе те пысăк пулăшусем панă. Çак тĕлĕшпе фронтовиксен çемьисене колхоз фермисенчен 32567 пуç выльăх укçасăр панă.

Хуласемпе район центрĕсенче пурăнакан çĕрсĕр фронтовиксен çемьисене çĕр участокĕсем уйăрса панă.

Республикăра ачасем валли диэтически тата ытти урăх столовăйсем уçнă. 1944-мĕш çулта çуллахи вăхăтра, ачасен сывлăхне тăтăшах сыхласа пырас шутпа, лагерьсем организациленĕ, унта фронтовиксен ачисене янă.

1944-мĕш çулта комсомол пуçарнипе фронтовиксен ачисене пулăшмалли фонд валли 1.500 пин тенкĕ укçа пухнă. Çак фондран фронтовиксен отлично вĕренекен ачисене пама 200 стипенди тунă. Фронтовиксен çемьисем валли çулсеренех апат-çимĕç фончĕсем тăваççĕ.

Фронтовиксен çемьисене пулăшма материальнăй база тăвас тĕлĕшпе Пăрачкав районĕнчи „Красный пахарь" колхоз питех те паха ĕç пуçарса ячĕ, вăл фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонд тума планран ирттерсе тырăсем акса хăварчĕ. Çак патриотизмла ĕçе Чăваш республикинчи колхозниксем хапăл тусах йышăнчĕç, вĕсем вара, 1944-мĕш çулта фронтовиксен çемьисене пулăшмашкăн икĕ пин гектара яхăн тыр акса хăварса, пурĕ 8 пин центнер ытла тырă пухса илчĕç.

* * *

Чăваш халăхĕ, Ленинăн аслă та нихăçан сӳнми идейĕсемпе хавхаланса, 25 çул хушши хăйĕн хуçалăх вăйне çирĕп-

летессишӗн, хӑйӗн культурӑллӑ ӳсӗмне хӑпартассишӗн тӑрӑшса ӗҫлерӗ.

Ленинпа Сталин пире хамӑр ҫӗршывӑн ӗмӗрхи кая юлса пынине пӗтермелли, хамӑр государствӑн ирӗклӗхӗпе никамапӑхӑнманлӑхне ҫирӗплетмелли ҫулсемпе майсем кӑтартса пачӗҫ. Вырӑс халӑхӗ мӗнпур национальноҫсен халӑхӗсене хӑй тавра пӗтӗҫтерче. Ӗлӗкхи Российӑри кая юлнӑ вӑйсӑр халӑхсене вырӑс халӑхӗ ӗмӗрхи нушалӑхран кӑларса хӑйсен культурине, государственноҫне тума, экономика тӗлӗшпе ҫирӗпленме пулӑшрӗ. Пирӗн ҫӗршыври халӑхсем, вӑл шутрах чӑваш халӑхӗ те, аслӑ вырӑс халӑхӗ ертсе пынипе, алла хӗҫпӑшал тытса, хӑйсен Тӑван ҫӗршывӗн ирӗклӗхӗпе никамапӑхӑнманлӑхне сыхласа хӑварчӗҫ. Пирӗн государство вӑйӗ вӑрҫӑ ҫулӗсенче ӳссе пычӗ. Тӑшмана татӑклӑнах ҫӗнтернӗ вӑхӑта, вӑрҫӑ вӗҫленнӗ вӑхӑта Совет ҫӗршывӗ тата хӑватлӑрах тата вӑйлӑрах пулса тӑчӗ. Ҫакӑнта Ленинпа Сталинӑн наци политикин вӑйӗ, Совет Союзӗнчи пур халӑхсене тӑванла пӗрлештерсе тӑракан политикӑн вӑйӗ уҫҫӑнах палӑрчӗ. Совет халӑхӗ урса кайнӑ тӑшманпа ҫапӑҫнӑ чухнехи чи йывӑр вӑхӑтсенче те тӑшмана ҫӗнтерес шанчӑка пӗр минутлӑха та ҫухатмарӗ, мӗншӗн тесен вӑл Ленинпа Сталин ертсе пынипе тунӑ хамӑрӑн социализмла ҫӗршыв вӑйлӑ та хӑватлӑ пулнине, ютҫӗршыв захватчикӗсем Совет государствин крепоҫне хавшатма пултарас ҫуккине аванах пӗлсе тӑнӑ. Ҫӗнтерӳ пулассине чӑваш ӗҫҫыннисем те пӗтӗм чӗререн шанса тӑнӑ, вӗсем вӑрҫӑн чи хӑрушӑ тапхӑрӗсенче хӑйсен аслӑ Тӑван ҫӗршывне, хӑйсен ирӗклӗхӗпе телейне сыхлама темиҫе вуншар пин ывӑлӗсемпе хӗрӗсене фронта ӑсатрӗҫ. Совет Союзӗнчи мӗнпур халӑхсемпе никам аркатайми туслӑхпа ҫыхӑнса тӑракан чӑваш халӑхӗ тӑван ҫӗршыв умӗнчи хӑйӗн тивӗҫне чыслӑн пурӑнӑҫа кӗртсе пынӑ, халӗ те пурӑнӑҫа кӗртсе пырать. Чӑваш ӗҫҫыннисем тӑшмана ҫӗнтерес, фашистла Германие ҫӗмӗрсе тӑкас тӗлӗшпе питех те нумай тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ.

Чӑваш республики 25 ҫул тултарни чӑваш халӑхӗ чӑнласах ҫӗнӗрен ҫуралса ҫӗнӗ те телейлӗ пурӑнӑҫпа пурӑнма пуҫланӑ тапхӑр пулса тӑчӗ. Ленин-Сталинӑн аслӑ партийӗ ертсе пынипе, хӑватлӑ вырӑс халӑхӗ тӑванла пулӑшса пынипе, Чӑваш ӗҫҫыннисем республикӑн халӑх хуҫалӑхӗпе культурине чӑнласах чечеклентерсе ячӗҫ. Чӑваш ҫӗршывӗнче шултра предприятисем тунӑ, ялхуҫалӑхне коллективизациленӗ, тӗрлӗ шкулсем, политикӑпа ҫутӗҫ учреждениссем тунӑ. Чӑваш халӑхӗ, хӑйӗн республикин вӑй-хӑватне ҫирӗплетсе пынипе пӗрлех, хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн оборо-

нин вăй-хăватне те, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕн вăй-хăватне те çирĕплетсех пычĕ.

Халĕ, вăрçă эпир татăклăнах çĕнтернипе вĕçленнĕ хыççăн, мирлĕ аталану тапхăрĕ пуçланнă вăхăтра чăваш халăхĕ республикăн хуçалăх вăй-хăватне çирĕплетес тĕлĕшпе татах та ытларах тимлесе тăрăшса ĕçлет, вăл Совет Союзĕнчи тăванла халăхсемпе малашне те туслăха çирĕплетсе пырать.

---

Отв. ред. П. Золотов.

НТ. 00363. Подписано к печати 24/VI-45 г. Объем 2,25 п. л.
Заказ 633 Тираж 4000 экз.

Типография № 1 Упр. полиграфпром. при СНК ЧАССР, Чебоксары.

3
ОТК

Цена 1 р. 75 коп.

*З. А. АНДРЕЕВА*

**СОВЕТЫ ЧУВАШИИ ЗА 25 ЛЕТ**

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ—1945